Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 24
ВЫРСАРНИКУН
№ 40 (8692)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕ. Республикăра капитальнăй строительство планне тултарасси мĕнле пыни çинчен (2 стр.).
Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне Мускавра уявлани (1 стр.).
Çураки валли таса та сортлă вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлер (1 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх (1 стр.).
Н. Никитин.—Агитаторсен шкулĕ (2 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. С. Миронов. — Поселок совечĕн яланхи комиссийĕсем (3 стр.).
Муркаш районĕнчи ĕççыннисемпе общественнăллă организацисен пуçарăвне йышăнса. И. Волков. — Шкула пулăшасси—общественность ĕçĕ (3 стр.).
Г. Сидоров.—Совет субтропикĕсем (3 стр.).
А. Макаров.—Чугун çул работникĕсен тивĕçĕ (3 стр.).
«Чăваш Коммуни» хаçатра çырнă хыççăн (3 стр.).
Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ кунне урăх çĕршывсенче уявлани (4 стр.).
Д. Бочаров.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăри вăрçа чарса лартма ыйтаççĕ (4 стр.).

Строительство планне ăнăçлă тултарар

ВКП(б) Чăваш обкомĕн çак кунсенче иртнĕ пленумĕ республикăра капитальнăй строительство мĕнле пыни çинчен сӳтсе яврĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви фабрикăсемпе заводсем, пурăнмалли çуртсемпе культурăллă учрежденисем тăвас ĕçе яланах пысăка хурса хакланă. Партин XVIII-мĕш съездĕнче И. В. Сталин юлташ çапла каланă: **«Экономика тĕлĕшпе капитализмлă чи пысăк çĕршывсенчен иртсе кайма мĕн кирлĕха? Çавна тума, пуринчен малтан, тимĕр тата çине тăрса малалла кайма кăмăл пулни, жертвăсем тума хатĕр тăни, пирĕн социализмлă промышленноçа пур майсемпе те сарса пымашкăн пысăк укçа-тенкĕ хывма хатĕр тăни кирлĕ»**, тенĕ. Строительство ĕçĕсем пирĕн çĕршывра уйрăмах вăрçă хыççăнхи çулсенче анлă сарăлса кайрĕç. 1951 çулта халăх хуçалăхне, 1940 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут çурă ытларах укçа-тенкĕ хывнă. Сталин юлташ пуçарнипе, совет халăхĕ Атăлпа Днепр, Донпа Аму-Дарья çинче коммунизмăн аслă стройкисене тăвать.

Ленинла-сталинла наци политикине пурнăçласа пырса, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви Чăваш республикин экономикипе культурине аталантарассишĕн куллен тăрăшаççĕ, çĕнĕ предприятисем, пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем, шкулсемпе больницăсем туса лартма укçа-тенкĕ, оборудовани, материалсем нумай уйăрса параççĕ. Юлашки çулсенче республикăри промышленность чылай ӳсрĕ, машинăсем юсакан, электропромышленность, пир-авăр, хими промышленноçĕ çĕнĕрен туса лартнă, йывăç касkалакан тата вăрман промышленноçĕ вăйланчĕ. Вăрман промышленноçĕ çултан-çул ытларах механизмсемпе хĕçпăшалланать.

Промышленность аталаннă май пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем, шкулсемпе больницăсем тăвас ĕç те ӳсет, хуласемпе рабочи поселокĕсем пысăкланаççĕ тата илемленеççĕ. Промышленноçа, ялхуçалăхне, çурт-йĕрпе коммунальнăй хуçалăха, культура строительствине укçа-тенкĕ хывасси çултан-çула ӳсе пырать. Капитальнăй строительство уйрăмах 1952 çулта пысăк хăвăртлăхпа ӳсет. Кăçал строительствăна пĕлтĕрхипе танлаштарсан, пĕр хут çурă ялăн ытларах укçа-тенкĕ хывма палăртнă.

Обком пленумĕ партипе правительство пирĕн республикăна паракан пысăк пулăшупа эпир çителĕксĕр усă курнине палăртрĕ. Капитальнăй ĕçсем тума уйăрса паракан укçа-тенкĕпе çултан-çул пĕтĕмĕшпех усă кураймастпăр. 1951 çулта строительство планне 85,9 процент çеç тултарнă. Уйрăмах Шупашкарти пир-авăр комбинатне, Канашри çу заводне, Шупашкарти аш-какай комбинатне тăвасси çителĕксĕр пырать. Иртнĕ çулта пир-авăр комбинатне тума уйăрса панă укçа-тенкĕн 88,6 процентне çеç усă курнă. Ку строительствăра ĕçе кирлĕ пек организацилемен, механизмсене лайăх ĕçлеттермеççĕ. Строительствăпа монтаж управленийĕн руководителĕсем ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлеме тăрăшман, строительство хакне чакарассишĕн, ĕç пахалăхне лайăхлатассишĕн большевикла кĕрешмен. Материалсем, ĕç укçи ытлашши пĕтернине, япăх ĕçсене пăсса тӳрлетнине пула строительство хакĕ хăпарнă. Çавăн пек ситменлĕхсем «Росмаслобстрой» трестĕн строительствăпа монтаж управленийĕнче, «Чăвашстрой» трестра, Çĕмĕрле комбинатĕнчи строительствăпа монтаж управленийĕнче те пулнă.

Чылай предприятисемпе организацисем пурăнмалли çуртсем лартма уйăрса панă укçа-тенкĕпе япăх усă курнă.

Строительство ĕçĕсем республикăра кăçалхи пĕрремĕш кварталта та çителĕксĕр хăвăртлăхпа пыраççĕ. Министерствăсемпе ведомствăсен, предприятисен тата Чăвашпроект кантурĕн руководителĕсем проектсемпе сметăсене вăхăтра çырса хатĕрлеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Строительство организацийĕсем уйăрса паракан материалсене вăхăтра кӳрсе килмеççĕ, хĕле япăх хатĕрленеççĕ, çавна пула нумай ĕçсене çуллана хăвараççĕ, çулталăкри плана тултараймаççĕ.

Обком пленумĕ ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсен строительство ĕçĕсем мĕнле пынине çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнине палăртрĕ. Вĕсем строительсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сарман, пуçламăш парторганизацисен рольне ӳстермен. Строительсем хушшинче партиллĕ-организациллĕ тата массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелемен.

Чăвашоблпрофсоветпа предприятисенчи профсоюз организацийĕсем строительсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Сталинла премин лауреачĕсен тата Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи стахановецсен опытне япăх сараççĕ. Профсоюз организацийĕсем рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешмеççĕ, строительсем хушшинче культурăллă ĕçе куллен туса пымаççĕ.

Стройкăсенче çамрăксем нумай ĕçлеççĕ. Апла пулин те ВЛКСМ обкомĕпе хула комитечĕсем тата райкомĕсем стройкăсенчи комсомол организацийĕсене çамрăксене воспитани парас ĕçе лайăхлатма сахал пулăшаççĕ.

Капитальнăй строительствăна ертсе пырас ĕçри ситменлĕхсене хăвăртрах пĕтересси—облаçри парторганизацин пысăк та ответлă задачи пулать. ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсен правительство фабрикăсемпе заводсем, пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем тума уйăрса паракан укçа-тенкĕпе пĕтĕмĕшпех усă курма, 1952 çулхи плана кашни строительство организацийĕ çинĕпе тултарма пулăшакан мерăсем йышăнмалла. Вĕсен строительство организацийĕсене ертсе пырас ĕçе татăклăн лайăхлатмалла, строительство ĕçĕсем мĕнле пынине тимлĕрех тĕрĕслесе тăмалла, рабочисем хушшинче партиллĕ-политикăллă тата массăллă ĕçе лайăхлатмалла.

Капитальнăй ĕçсен планне ăнăçлă тултарасси строительство организацийĕсем, министерствăсемпе ведомствăсем тата предприятисем ĕçе механизацилессишĕн, оборудованипе лайăх усă курассишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, материалсене перекетлессишĕн, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн, ăста рабочисем вĕрентсе хатĕрлессишĕн куллен большевикла кĕрешнинчен килет. Пур ĕçе те графикпа тăрăх тата пысăк пахалăхпа тăвасси,— строительсемпĕн закон пулса тăмалла.

ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсем стройкăсенчи парторганизацисене ертсе пырас ĕçе вăйлатма, рабочисем хушшинче партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçе лайăхлатма, критикăпа самокритикăна анлă сарма, парторганизацисен рольне ӳстерме тивĕçлĕ. Строительсем хушшинче докладсемпе лекцисем тăтăшах иртпермелле, клубсемпе хĕрлĕ кĕтессен ĕçне йĕркелемелле, общежитисенче массăллă ĕçе вăйлатмалла. Пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене агитколлективсен ĕçне вăйлатма, политикăллă агитацин идейăллă шайне ӳстерме тата агитаци ĕçне умра тăракан задачăсемпе çыхăнтарса туса пыма пулăшни кирлĕ.

Стройкăсенчи партипе профсоюз организацийĕсен рабочисем, инженерсемпе техникĕсем тата служащисем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатмалла, кашни работника ăмăртăва хутшăнтармалла, малта пыраканнисен опычĕпе ыттисене паллаштармалла. Малта пыракан стройка, лайăх каменщик, штукатур, плотник, маляр, стахановла ĕçлекен участок, бригада ятне илме тивĕçлĕ пулассишĕн строительсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлă сарăлтăр.

ВЛКСМ обкомĕн стройкăсенчи комсомол организацийĕсене çирĕплетмелле, вĕсене социализмлă ăмăртăва вăйлатма, çамрăксене воспитани парас ĕçе лайăхлатма пулăшас пулать.

Республикăри тата хуласемпе районсенчи хаçатсен строительство ĕçĕ мĕнле пынине тăтăшах çутатмалла, малта пыраканнисен опытне пропагандăламалла, ĕçри ситменлĕхсене çивĕччĕн критикăламалла.

Нумаях пулмасть «Чăвашстрой», трест коллективĕпе Шупашкарти кирпĕч заводĕн коллективĕ 1952 çулхи плана срокчен тата иртерсе тултарма пур ĕçе те пысăк пахалăхпа туса пыма социализмлă обязательство йышăнчĕç. Çулталăкри плана ăнăçлă тултарассишĕн стройкăсенче тата стройматериалсем туса кăларакан предприятисенче социализмлă ăмăртăва анлă сарас пулать.

ВКП(б) обкомĕн IX-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене большевикла пурнăçласси—республикăри партипе совет общественноçĕн чыслă тивĕçĕ.

Çураки валли таса та сортлă вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлер!

Обязательство илнипех лăпланнă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал вăйлă тырпул ситĕнтерме обязательство илнĕ. Колхоз руководителĕсен обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене ĕçе хутшăнтармалла пулнă ĕнтĕ. Çăнах та, суракине хатĕрленесси çинчен колхозниксен пухăвĕсенче, колхоз правленийĕн ларăвĕсенче пĕрре кăна мар сӳтсе явнă, паха решенисем йышăннă. Анчах çав решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Колхозăн суракинче акма хăшпĕр культурăсен (клевер, вир) вăрлăхĕсем çителĕклĕ мар. Ситмен вăрлăхсене улăштарса илме тырă кирлĕ чухлех уйăрса хăварнă. Колхоз правленийĕн (председателĕ Н. Алексеев) тимсĕрлĕхне пула кăна колхозра вăрлăх ситмест. Çавнашкалах колхозăн сортлă мар вăрлăха улăштарса сортлă вăрлăх илсе килмелле. Çак ĕçе тума вăхăт та нумай кирлĕ мар, çапах та сортлă вăрлăх хатĕрлемен. Пур пек вăрлăха тасатса, сортласа акма юрăллă тăвас ĕç те тӳсме çук юлса пырать.

Суракине ăнăçлă ирттерме, паллах, ялхуçалăх машинисемпе транспорт хатĕрĕсем çителĕклĕ тата юсавлă пулмалла. Вĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе колхозра нимĕн те туман. Плугсемпе сӳресем кĕркунне мĕнле пулса лартнă, çаплипех лараççĕ. Вĕрен-пăяв кирлĕ чухлĕ çук. Корнилов юлташ ертсе пыракан бригадăра лаша кӳлме пĕкĕ те ситмест.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илме, чи малтан, удобренисем нумай хатĕрлемелле. Кунта уи çинчен манса. Яковлев, Корнилов, Афанасьев, Романов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем уя пурĕ те 150 лав çеç тислĕк кăларнă. Кĕл пухма, торф хăвăрма тата ытти удобренисем хатĕрлеме тытăнман.

Суракине хатĕрленес ĕçри пысăк ситменлĕхсене пĕтерме пуçламăш парторганизацин те тивĕçлипе пулăшмасть.

Колхозсенче суракине хатĕрленес ĕç мĕнлĕ пынипе вырăнти Советсен куллен интересленмелле. Анчах та Упукушкăнь ял Совечĕ ку ыйтăва пĕрре те пăхса тухман, колхоз председателĕсен отчетне итлемен.

Совет çыннисем хăйсем панă сăмаха яланах чыслă пурнăçлаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсен те илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн, суракине пур енчен те хатĕрлесе ситĕнтерешĕн мĕнпур вăй мобилизацилемелле.

В. ЧОБАЯКИН.

Пысăк тухăçлă кок-сагызшăн кĕрешетпĕр

Иртнĕ çулта Канаш районĕнчи «1-ое Мая» колхоз чылай пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илчĕ. Кок-сагыз туса сутнăшăн колхоз пире 94 пин тенкĕ укçа тӳлерĕ. Ку пире тата пысăкрах тухăçлă кок-сагыз туса илме хавхалантарать.

Колхоз хирĕнче кок-сагыз кăçал та чылай пысăк вырăн йышăнать. Ăна пăхса ӳстерес тĕлĕшпе ятарласа бригада организациленĕ. Бригадăра 68 çын. Вĕсенчен 4 звено тунă.

Плантацире хĕлле те ĕç пĕр кунлăха та чарăнса тăмасть. Кăçал кĕркунне кок-сагыз акса хăвармалли вырăна эпир иртнĕ кĕркунне çĕртме туса хăвартăмăр. Кĕрхи çĕртмене трактора 25 сантиметр тарăнăшĕн сухаланă. Палăртнă тăрăх унта 900 тонна тислĕк кăлармалла. Вăл шутран çурринĕ хĕлле, ыттине—çăва тухсан, çĕртме сухи тунă вăхăтра, турттаратпăр. Паянхи куна уя 300 тонна ытла тислĕк кăларнă.

Пĕлтĕр кок-сагыз акса хăварнă вырăнта пĕр хутчен юр тытрăмăр. Иртнĕ çулсенче эпир юра кумасем туса тытнă. Анчах пурнăç кун пек тытнин усси сахаллине катарса панă кумасенчи юра çил вĕçтерсе пĕтерет. Кăçал юра валсем (юр хӳмесем) туса тытатпăр. Юр хӳмесен хӳттинче пĕм çӳлĕш кĕрт хӳсе лартать, ăна çил вĕçтерсе каймасть. Халĕ валсене çӳллĕрех иккĕмĕш хут юр тытма пуçларăмăр.

Кок-сагыз калчине пĕр хут апат памалăх суперфосфат хатĕрлерĕмĕр. Кунсăр пуçне кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай пуçтаратпăр.

Иртнĕ çулсенче кок-сагыз речĕсем хушшинчи тăпрана катмакпа çемçетнĕ. Ун пек ĕçлесен плантацине çумкурăксенчен тасатса тăма йывăр. Пĕлтĕр кĕркунне МТС ретсен хушшине çемçетме май паракан тракторсем кӳрсе килчĕ. Ку пирĕн ĕçе нумай çăмăллатма тата кок-сагыз тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Ĕç механизациленнĕ май ретсенĕ те урăхларах тума тивет. Малашне эпир кок-сагыз тĕмисем хушшине икĕ майлă та 45 сантиметр хăварса акма пуçлатпăр.

Кок-сагыза текех çĕнĕ культура теме çук ĕнтĕ. Ăна пирĕн республикăри колхозсенче вунă çула яхăн акса тăваççĕ. Анчах унăн агротехникине тĕпчесе вĕренмелли нумай-ха. Çавăнпа та эпир хĕллехи вăрăм каçсене ахаль ирттерместпĕр. Эпĕ хам тата 4 звеньевой агротехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курса çӳретпĕр. Бригадăри ытти колхозниксем валли кок-сагыз агротехникине вĕренмелли кружок организациленĕ. Вăл кружокра агроном малта пыракансен опычĕсемпе тĕплĕ паллаштарать.

Кăçал плантацири кашни гектартан 25 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илме ĕмĕтленетпĕр.

А. ПАВЛОВ,
кок-сагыз бригадин бригадирĕ.

Вăрлăхшăн тăрăшни çук

ЕТĔРНЕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне пысăк задачăсем лартрĕ. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче гектартан сахалтан та 18 центнер тĕштырă туса илмелле.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерес ĕçре пахa вăрлăх пысăк вырăн йышăнать. Анчах районти чылай колхоз руководителĕсем çураки валли вăрлăх хатĕрлес ĕçе хаклаçмаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, район вăрлăх фончĕ валли тырпул çителĕклĕ уйăрнă. Çав тушăрах хăшпĕр колхозсенче пăрça йышши культурăсен вăрлăхĕ çитмест. Жданов ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенче пăрçа йышши культурăсем чылай çитмеççĕ.

Уйрăм колхозсенче техникăллă культура тата нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕсем сахал. Ворошилов ячĕпе тăракан артелĕн техникăллă культура вăрлăхĕ 12 центнер, Тимирязев ячĕпе тăракан колхозăн 14 центнер ытла çитмест.

Вăрлăхсен пахалăхĕ начаррине те палăртмалла. Тĕрĕсленĕ шутран вăрлăх 67 процент таран тасалăх енĕпе кондицие лармасть. Апла пулин те колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем вăрлăхсене иккĕмĕш хут тасатас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен инспекци работникĕсен те ку енĕпе хăйсен ĕçне лайăхлатмалла.

Районта сортлă вăрлăхсем улăштарса илессине начар йĕркеленĕ. Ку енĕпе плана çурри яхăн кăна тултарнă. Районти ялхуçалăх панĕ сортлă вăрлăхсем туянас пирки колхозсене тахçанах графиксем панă. Анчах çав графиксем мĕнле пурнăçланса пынине куллен тĕрĕслемен пирки, вĕсем хут çинче кăна тăрса юлаççĕ.

Я. СОРОКИН.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх

Февралĕн 15-мĕшĕ — Мартăн 15-мĕшĕ

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВ ПЛАННЕ «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрлени	Çул хĕррине илсе тухни	Турттарса кăларни
Улатăр	76,7	81,8	60,5
Элĕк	77,3	72,1	51,9
Вăрнар	88,0	70,0	81,7
Пăрачкав	87,7	81,8	51,3
Ишлей	60,2	—	26,6
Калинино	84,2	67,7	80,2
Канаш	84,6	80,4	75,9
Комсомольски	92,6	98,3	90,6
Куславкка	82,7	95,1	77,4
Красноармейски	66,3	20,9	57,4
Хĕрлĕ Чутай	86,5	65,4	—
Кувакино	62,8	78,4	40,3
Сĕнтĕрвăрри	72,6	66,9	42,2
Муркаш	107,5	110,2	—
Октябрьски	57,9	84,0	65,7
Первомайски	85,9	67,4	82,3
Пăрачкав	89,2	98,6	101,0
Советски	63,1	—	61,9
Сĕнтĕр	97,5	35,3	77,6
Вăрмар	62,9	93,5	32,6
Çĕрпӳ	63,7	83,6	59,4
Шупашкар	90,9	91,8	40,3
Чкаловски	101,4	91,3	73,7
Чурачăк	80,3	65,2	43,9
Шăмăршă	70,9	67,2	65,1
Шăхасан	77,9	66,7	50,6
Çĕмĕрле	115,1	84,1	191,4
Етĕрне	75,2	95,5	54,3
Елчĕк	42,0	73,0	57,5
Тăвай	59,9	105,8	48,0

Пур колхозсем те хутшăннă

ПЕРВОМАЙСКИ, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти пур колхозсем те стахановла уйăхлăха хутшăнчĕç. Шверник ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государство заданине срокчен тултарчĕç. Анчах çакă колхозниксене çырлахтармасть. Уйăхлăха хутшăнса, вĕсем Тăван çĕршыв валли планран иртерсе 200 фестметр йывăç касса хатĕрлеме, 100 фестметр турттарса кăларма пулчĕç. Колхозниксем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ: вăрманта 50 çын çуран, 8 çын лавпа тата пĕр автомашина ĕçлеççĕ. Уйрăмах Маков шоферĕпа Тимофеев стажер паха тĕслĕх кăтартнине палăртас пулать. Вĕсем чылайранца вăрмантан тухмасăр ĕçлеççĕ. Колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарма районти колхозниксене ăмăртăва чĕнчĕç.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те уйăхлăха активлă хутшăнчĕç, халăх хуçалăхне планран иртерсе йывăç хатĕрлесе пама пулчĕç. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем йывăç турттарса кăлармалли плана тултарнă, халĕ йывăç касса хатĕрлес тĕлĕшпе хастарлă ĕçлеççĕ. Çак кунсенче «Пионер» колхозпа «Сталинград» колхоз членĕсем те вăрман хатĕрлес ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

(Хамăр корр.).

Вăрмар районĕ çаплах юлса пырать

Вăрмар районĕ Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăмра. Вăл касни йывăçа турттарса кăлармалли сезонти плана 32 процент çеç тултарнă.

Районти чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕ тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Кавал ял Советĕнчи «Маяк» колхозран вăрманта куллен 40 лав, 30 çын çуран ĕçлемелле пулсан, февралĕн 16—17-мĕшĕсенче 7 çын çуран, 17 лав ĕçленĕ. Кунта вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх çинчен колхозниксене ăнлантарса паман. Колхоз председателĕ Таратин, ял Совет исполкомĕн председателĕ Викторов, парторганизаци секретарĕ Кузнецов юлташсем колхозниксене уйăхлăха хутшăнтарма тăрăшмаççĕ. Парторганизацире 24 коммунист. Вĕсенчен иккĕшĕ çеç вăрманта ĕçлет. Ĕç хăй юххипе пулса пынипе колхоз йывăç хатĕрлемелли задание 20 процент кăна пурнăçланă.

«Авангард», Сталин ячĕпе тăракан, «Труд», Жданов ячĕпе тăракан, Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче вăрманта ĕçлеме бригадăсем туман.

«Динамо», «Слава», «Пионер» колхозсен членĕсем вăрмантан кашни эрнерех киле таврăнаççĕ.

Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ вăрман хатĕрлес ыйтупа пăчăх интересленмеççĕ теме çук. Вĕсем хăйсен ларăвĕсенче юлса пыракан ял Совет тата колхоз председателĕсен отчечĕсене тăтăшах итлеççĕ, пысăк решенисем йышăнаççĕ. Анчах хăйсем йышăннă паха решенисене пурнăçа кĕртме тăрăшмаççĕ. Райисполкомпа парти райкомĕ илсене каякан активистсен ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. Хăшпĕр активистсем ялсене кайсан ял Совет исполкомĕсемпе колхоз председателĕсене кирлĕ пек пулăшу памаççĕ. Нумай пулмасть ВКП(б) райком секретарĕ Орлов юлташ «Хĕрлĕ Мăрат» колхозпа Молотов ячĕпе тăракан колхозра, райсовет исполкомĕн председателĕ Степанов юлташ Калинин ячĕпе тăракан колхозра, райплан председателĕ Ефремов юлташ «Труд» колхозра пулчĕç. Анчах çакăн хыççăн та асăннă колхозсем вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пыраççĕ.

(Хамăр корр.).

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне Мускавра уявлани

Çар Министерствин савăнăçлă ларăвĕ

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа февралĕн 22-мĕшĕнче Мускавра ССР Союзĕн Çар Министерстви столицăри ĕççыннисен представителĕсемпе пĕрле савăнăçлă лару ирттернĕ.

Совет Çарĕн Центральнăй Театрне уяври пек илемлетнĕ. «Сывă пултăр пирĕн хăватлă социализмлă Тăван çĕршыв!», «Сывă пулччăр Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем!»—çак сăмахсене хĕрлĕ бархат çине çырнă.

Сценăн шал енче Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене тăвакан сулпуççен— В. И. Ленинăн тата И. В. Сталинăн портречĕсем. Çапăçури ялавсем патĕнче пехотинецсем, морякĕсем, летчиксем, танкистсем, артиллеристсем, кавалеристсем хисеплĕ хуралта тăраççĕ.

Савăнăçлă ларăва Совет Союзĕн Маршалĕ В. Д. Соколовский юлташ уçнă.

Хисеплĕ президиума пысăк хавхаланупа ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн И. В. Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйланă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни çинчен Совет Союзĕн Маршалĕ Л. А. Говоров юлташ доклад тунă.

Савăнăçлă ларура пулнисем пысăк çĕкленӳпе И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă. (ТАСС).

Тинĕс-Çар Министерствин савăнăçлă ларăвĕ

Февралĕн 22-мĕшĕнче Советсен Çуртĕн Колоннăллă залĕнче Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа Тинĕс-Çар Министерстви столицăри ĕççыннисен представителĕсемпе пĕрле савăнăçлă лару ирттернĕ.

Уяври пек илемлетнĕ зала çар морякĕсем—адмиралсем, генералсем, офицерсем, парти тата совет активĕ, Мускав хулинчи предприятисенчи стахановецсем пухăннă.

Сцена çинче йăтăнпа çырнă çак сăмахсем: «Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни сывă пултăр!»—тенисем çутăлса тăраççĕ. Çапăçури ялавсем патĕнче çар морякĕсем хисеплĕ хуралта тăраççĕ.

Савăнăçлă ларăва ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕ вице-адмирал Н. Г. Кузнецов юлташ уçнă.

Хисеплĕ президиума питех те пысăк çĕкленӳпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн И. В. Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйланă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни çинчен адмирал Н. Е. Басистый юлташ доклад тунă.

Савăнăçлă ларура пулнисем пысăк çĕкленӳпе И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă. (ТАСС).

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ умĕн

ВĂРНАР. «Красный кустарь» артель—районта малта пыракан артельсенчен пĕри. Вăл производство планне кварталтан квартала иртерсе тултарать. Артель 1951 çулхи производство планне чылай иртерсе тултарчĕ, туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатрĕ. Иртнĕ çулта планран иртерсе 100 пин тенкĕ ытла продукци туса кăларнă.

Артельте ĕçлекенсем СССР Верховнăй Совечĕн мартăн 5-мĕшĕнче уçăлакан сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕрремĕш кварталти производство планне тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме, продукци пахалăхне лайăхлатма пулса çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Артель январь уйăхĕнчи плана 124 процент тултарчĕ, Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне февраль уйăхĕнчи плана тултарнипе паллă турĕ. Артельте Т. Огурцова ертсе пыракан бригада малта пырать. Л. Михайлова, А. Шумилова, Т. Николаева, А. Квасова çĕвĕ çĕлекенсем кулленхи нормăна 130—150 процент таран тултараççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Уйăхри плана иртерсе тултарнă

КОМСОМОЛЬСКИ. Çыхăну уйрăмĕсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура Аслă Çĕрпӳелĕнчи çыхăну уйрăмĕ (начальникĕ К. Ласточкина юлташ) малта пырать. Почта уйрăмĕ 1951 çулхи плана 115 процент тултарнипе вĕçлерĕ. Январь уйăхĕнчи задание 156 процент тултарса, малти вырăна тухрĕ.

Кунти почта уйрăмне куллен темиçе çын пырать. К. Ласточкина юлташ клиентсене яланах кăмăллă йышăнать.

Почтальонсем хушшинче те социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Вĕсен чи лайăх почтальон ятне илессишĕн ăмăртаççĕ.

С. СИДОРОВ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине Шупашкарта уявлани

Ĕнер Шупашкарта, Советсен Çуртĕн Пысăк залĕнче, Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа хулари общественнăллă организацисен представителĕсен савăнăçлă пухăвĕ пулчĕ.

Президиумра—партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, общественнăллă организацисен представителĕсем.

Пуху, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйларĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни çинчен пухура П. В. Рязанов юлташ доклад туса пачĕ.

Пуху пысăк çĕкленӳпе халăхсен аслă çулпуççĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕ

Республикăра капитальнăй строительство планне тултарасси мĕнле пыни çинчен

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕнче иккĕмĕш ыйтупа — республикăра капитальнăй строительство планне тултарасси мĕнле пыни çинчен ВКП(б) обкомĕн секретарĕ **Н. Н. Никитин** юлташ доклад турĕ.

Пирĕн халăх хуçалăхĕ пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пырать, тет докладчик. СССР халăх хуçалăхне малалла аталантарса пымалли государство планне 1951 çулта мĕнле тултарни çинчен ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтернинчен пирĕн промышленность, уйрăмах малтан йывăр индустри, сĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем туни курăнать. Капитальнăй строительство ĕçĕсем анлă саралнă, государство капитальнăй строительство валли укçа-тенкĕ нумайрах та нумайрах парса тăрать.

Партипе правительство куллен-кун пулăшса пынипе Чăваш республикин халăх хуçалăхĕ те малалла аталанса пырать. Çĕнĕ предприятисем, шкулсем, больницăсем, культурăпа йăла учрежденийĕсен çурчĕсене лартма государство пиро чылай укçа-тенкĕ парать. Иртнĕ çулхи халăх хуçалăх планĕ тăрăх республикăна капитальнăй ĕçсем валли 1949 çулхинчен 40 процент ытларах укçа-тенкĕ панă.

Анчах партипе правительство паракан пысăк пулăшупа эпир çителĕклĕ таран усă курмастпăр-ха. Иртнĕ çулталăкра республикăна капитальнăй строительство валли панă укçа-тенкĕрен 85,9 процентĕпе çеç усă курнă. Иртнĕ çулхи плана уйрăмах Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинче çителĕксĕр тултарнă. Çавăн пекех Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ, Куславккари çурт-йĕр тăвакан завод, Аш-какай тресчĕ тата сĕт-çу тресчĕ çумĕнчи стройкăсен тата ытти çĕрти строительствăсен планĕсене те çителĕксĕр пурнăçланă. Педагогика институчĕпе ялхуçалăх институчĕ çуртсене тума панă укçа-тенкĕрен тăватă пайран виçĕ пайĕпе те усă курман.

Республикăра капитальнăй строительство планне çителĕксĕр пурнăçласа пыни, чи малтан, халăх хуçалăхĕн çак пысăк участокне парти обкомĕ начар контроллесе тăнинчен килнĕ. Çакна ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ те кăтартса пачĕ. Партин хула комитечĕсемпе райкомĕсен чылайăшĕн, стройкăсемпе промышленность предприятийĕсенчи парторганизацисен нумайăшĕн строительство ĕçĕсене ертсе пырассинче пысăк çитменлĕхсем пур.

Республикăри чи пысăк стройка вăл — Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительстви пулса тăрать. Анчах унта виçĕ çул çурă хушшинче те смета тăрăх комбинатăн пĕрремĕш черетне тума панă укçа-тенкĕн 17,8 процентĕпе кăна усă курнă. Комбинат строительствинче 1951 çулхи плана 88,6 процент кăна тултарнă. Çаксем вĕсем стройкăра ĕçе кирлĕ пек организацилеменнинчен, механизмсемпе начар усă курнинчен килнĕ. Строительствăн ĕлĕкхи руководительĕсем ĕçсем кая юлса пынине тĕрлĕ сăлтавсем çине сулса яма хăтланнă, çав вăхăтрах хăйсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ пухма тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, квалификациллĕ кадрсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе организацилемен. Строительство руководителĕсем: пирĕн рабочисене вырнаçтарма вырăн çук, тесçĕ. Анчах пурăнмалли çурт-йĕрсем тумалли плана 51,6 процент кăна пурнăçланă. Укçа-тенкĕ хисепĕ енчен илсен, пысăк мар вырăн йышăнса тăракан ĕçсене тума тăхтаса тăнă, çакă вара çип арлакан фабрикăри малтанхи пин йĕкеллĕ станоксене вăхăтра ĕçе яма чăрмантарнă. Унта строительствăри пысăк резервсемпе усă курман. Строительствăри партбюро администрации хуçалăхла ĕçне çителĕксĕр контроллесе тăнă, ĕçри пысăк çитменлĕхсене хирĕç кирлĕ пек кĕрешмен, строительсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатман. Социализмлă ăмăрту ыйтăвĕсене парторганизацире темиçе хутчен те сӳтсе явнă, начар мар решенисем йышăннă. Анчах çак ĕçсене формальнă туса пынă. Çав решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе организациллĕ ĕçсем туман, ăмăрту мĕнле пыни çинчен строительствăра ĕçлекенсене пĕлтерсе тăман, малта пыракансен ĕç меслечĕсене пур çĕре те сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Стройкăра чаплă стахановецсем сахал мар. Анчах вĕсен опытне сарас тĕлĕшпе начар ĕçленĕ, Вĕсен опычĕсем çинчен республикăри хаçатсем те сахал çырнă. Социализмлă обязательствăсене мĕнле пурнăçланине, уйрăмах пахалăх енĕпе, тĕрĕслесе пымаççĕ. Иртнĕ çулта стройкăри ĕçсем сметăпа палăртнинчен хаклăраха ларни пулнă, унта тунă ĕçсем сметăпа пăхнинчен 11,2 процент хаклăраха ларнă. Стройка руководителĕсемпе партбюро строительствăри экономикăпа тĕплĕрех интересленнĕ пулсан, вĕсем çак пысăк çитменлĕхе вăхăтра палăртнă пулĕччĕç.

Пир-авăр комбиначĕн строительствинчи парторганизаци иртнĕ çулта пулнă пухăвĕнчех коммунистсем партбюропа строительство руководителĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критикăланă. Анчах çав çитменлĕхсенчен нумайăшне халичченех те пĕтермен, стройкăри чи кирлĕ участоксене нумайăшне кадрсемпе çирĕплетмерĕç, строительсен культурăпа йăла условийĕсенчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе çине

çителĕксĕр пăхаççĕ, рабочисен йышĕ час-часах улшăнса тăрать.

Çавăн пек çитменлĕхсем республикăри ытти нумай стройкăсенче те пур. Шупашкарти вылĕх пусмалли тата аш-какай усрамалли предприятие тата Канашри çу заводне тăвас ĕçе ертсе пыракан строительствăпа монтаж управленийĕ çав предприятисене вăхăтра туса пĕтермен. Стройка заказчикĕ — Аш-какай тресчĕ (управляющийĕ Ленишин юлташ) техникăллă документсене вăхăтра тăратман, Канашри çу заводне тутаракан заказчикта — сĕт-çу тресчĕ (управляющийĕ Кузнецов юлташ) — техникăллă документсене вăхăтра тăратман, вăл та хăйĕн ответлăхне туймасть. Строительствăпа монтаж управленийĕн стройкисенче тивĕçлĕ йĕркелĕх çук.

Шупашкар хулинчи строительсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕç мĕнле пулса пыни çинчен каласа, докладчик партин Шупашкар хула комитечĕ капитальнăй строительство ыйтăвĕсемпе решенисем нумай йышăннине, анчах çав решенисенчен чылайăшĕ пурнăça кĕмесĕр юлнине палăртать. Хула комитечĕ хулари парторганизацие капитальнăй строительство планне пурнăçлассишĕн кĕрешме мобилизацилемен. Çавна пула пир-авăр комбиначĕн строительствинчи парторганизаци халĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Хула комитечĕ педагогика институтĕнчи, пир-авăр техникумĕнчи, музыкăпа художество училищисенчи парторганизацисене пир-авăр комбиначĕн строительствинче ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ тата культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелеме пулăшма хушнă, анчах çав парторганизацисем хула комитечĕн решенине пурнăçламаççĕ.

Плана ăнăçлă пурнăçласси партиллĕ ĕçе мĕнле туса пынинчен килет. Çакна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод çумĕнчи строительствăпа монтаж кантурĕн ĕçĕсенчен курма пулать. Заводри партком строительство кантурне кадрсемпе çирĕплетме мерăсем йышăннă, строительсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе тата социализмлă ăмăртăва ертсе пырассине вăйлатнă. Çавăн хыççăн стройкăри ĕçсем нумай лайăхлачнă. Иртнĕ çулталăкри тăваттăмĕш кварталта стройка коллективĕ квартал планне тултарнă кăна мар, вăл унччен хи 9 уйăх хушшинче тумасăр юлнă ĕçсене те пурнăçланă. Кунта çапла ыйтас килет: партин Шупашкар хула комитетне хулари ытти стройкăсенчи ĕçсене çавăн пек лайăхлатма мĕн чăрмантарнă-ши? Партин Шупашкар хула комитечĕн строительствăн 1952 çулхи планне пурнăça кĕртес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать.

Партин Канаш хула комитечĕн ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Вăл строительство руководителĕсене хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама нумай пулăшнă, анчах тĕп ĕç çинчен — строительсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатасси çинчен, плана пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси çинчен маннă. Çавна пула хулари стройкăсенче çитменлĕхсем нумай — ăмăртса ĕçлессине çителĕклĕ сарман, план пурнăça кĕрсе пымасть. Строительство ыйтăвĕсемпе партин Çĕмĕрле райкомĕ те, Улатăр хула Совечĕн исполкомĕпе партин Улатăр хула комитечĕ те сахал ĕçленĕ. Куславккари çурт-йĕр тăвакан заводра капитальнăй ĕçсем тумалли плана пурнăça кĕртмен, Ку енĕпе завод дирекцийĕ мĕнле ĕçленине заводри партбюро тĕрĕслесе тăман. Ĕçсем çавăн пек начар пынине партин Куславкка райкомĕ те асăрхаман.

Кун хыççăн докладчик вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнче тата сутĕç, сывлăх, ялхуçалăх министерствисем енĕпе строительство ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен чарăнса тăрать. Вăл республикăри нумай стройкăсем укçа, материалсем сметăпа палăртнинчен чылай ытларах пĕтернине, счетсем тăрăх вăхăтра тӳлеменшĕн штраф тӳленине, материалсем нормăран иртерсе туяннине палăртать.

Нумай организацисенче строительство ĕçĕсен пахалăхĕ çав-çавах начар. Ăна пир-авăр комбинатне тăвакан организаци ĕçĕнчи çитменлĕхсенчен курма пулать. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри нумайах пулмасть туса пĕтернĕ пурăнмалли çуртсен урай хăмисем тикĕс мар, алăксемпе кантăк рамисем типсе çуркаланнă, штукатурка ванать. Çавăнпа унта пурăнакансем кăмăлсăр.

Çавăн пек çитменлĕхсене пĕтерес пулать, çуртсене пысăк пахалăхпа туса лартмалла, государство уйăрса паракан укçан кашни пусĕпе тĕрĕс усă курмалла.

Докладчик çакна палăртать: республикăра вырăнти строительство материалĕсем туса кăларасси чылай ӳсрĕ пулин те, стройкăсем материала кирлĕ таран илсе тăраймаççĕ. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕ (начальникĕ Александров юлташ) кирпĕч туса кăларассине ӳстермелли пур майсемпе те туллин усă курмасть, уйрăм предприятисем юлса пынине пĕтермест. Пĕлтĕр Иванова кирпĕч завочĕ плана тултарман, кунта ĕçре технологи дисциплини япăх, оборудовани час-часах пăсăлать. Управлени ку завода ертсе пыма пултарусăр çынна лартнă. Ку завода ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕ те сахал пулăшнă. Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерствипе Чăвашпромсовет çителĕксĕр ертсе пынипе пула вĕсене пăхăнса тăракан предприятисемпе промартельсем строительство материалĕсем туса кăлармалли плана тултарман.

Стройкăсем валли чул сахал хатĕрлесçĕ. Чăваш АССР Госпланĕпе Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕ республикăра паха чул запасĕсем тĕпчесе тупма тăрăшмаççĕ. Пир-авăр комбинатне тăвакан строительство управленийĕ чул хатĕрлекен предприяти организацилеме уйăрса паракан укçа-тенкĕпе çултан-çул усă курмасть.

Никитин юлташ парти обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕ строительство организацийĕсен ĕçĕпе тĕплĕ интересленменнине, çав организацисем мĕнле ĕçленине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăманнине, ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсене тата стройкăсенчи пуçламăш парторганизацисене строительствăна ертсе пырас ĕçе лайăхлатма çителĕксĕр пулăшнине палăртать. Халăх хуçалăхĕн çав участокне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Госплан та çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсем строительство организацийĕсен ыйтăвĕсене час-часах кирлĕ пек тивĕçтермесçĕ, пулăшу памаççĕ.

1952 çулта республикăна капитальнăй ĕçсем тума, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, пĕр хут çурă ытларах укçа-тенкĕ уйăрса панă. Шупашкарти пир-авăр комбинатне тума çеç 50 миллион тенкĕ панă. Ытти предприятисем туса лартма тата киввисене çĕнетсе пысăклатма, педагогика институчĕпе ялхуçалăх институчĕ валли çĕнĕ çуртсем лартма, пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем тума укçа-тенкĕ нумай уйăрса панă.

Кăçалхи январь уйăхĕнче республикăра капитальнăй ĕçсем тумалли плана тултарман, ку ĕç февраль уйăхĕнче те япăх пырать. Пирĕн вăхăта сая ямалла мар! Стройкăсенче вăя икĕ хут ӳстерсе ĕçлемелле, çапла тусан çеç плана тултарма пултаратпăр. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хушнă пек, ĕçе хăвăртрах çĕнетсе лайăхлатмалла. Пĕрремĕшĕнчен, обком бюровĕн, хула комитечĕсемпе райкомĕсен капитальнăй ĕçсем тумалли плана тултарассишĕн министерствăсемпе ведомствăсен, заводсемпе фабрикăсен руководителĕсен, строительство организацийĕсен начальникĕсен ответлăхне ӳстермелле.

Иккĕмĕшĕнчен, ВКП(б) обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн, хула комитечĕсемпе райкомĕсен строительство ĕçĕсем мĕнле пынине куллен тĕрĕслемелле, строительство организацийĕсен ĕçĕпе тĕплĕнрех интересленмелле, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăхăтра палăртмалла тата çав çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Виççĕмĕшĕнчен, предприятисемпе стройкăсенчи пуçламăш парторганизацисен организаторла рольне ӳстермелле, стройкăсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе тĕпрен лайăхлатмалла.

Тăваттăмĕшĕнчен, строительсем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатмалла, «Чăваштрой» тресчĕпе Шупашкарти кирпĕч завочĕн коллективĕсен примерĕпе, 1952 çулхи плана пур кăтартусем тăрăх та срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сармалла Строительство ĕçĕсем мĕнле пынине тата стахановецсен опытне пичетре анлă çутатмалла, çитменлĕхсене хытăрах критикăламалла.

Пиллĕкмĕшĕнчен, стройкăсенче социализмлă ăмăртăва ертсе пырас, стахановец-строительсен опытне сарас тĕлĕшпе Чăвашоблпрофсовечĕн рольне тата ытларах ӳстермелле.

Улттăмĕшĕнчен, ВЛКСМ обкомĕн стройкăсенчи комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, комсомолецсем çамрăк строительсен ăмăртăвне куллен ертсе пыччăр, çамрăксем хушшинче куллен массăллă-агитациллĕ ĕç туса пыччăр.

Çиччĕмĕшĕнчен, строительство организацийĕсене ертсе пыракан кадрсем тĕлĕшпе çирĕплетни кирлĕ. Вăл организацисенче плана тултарас ĕçе пуçарса ертсе пыма пултаракан работниксем пулччăр. Кĕске вăхăтра ăста рабочисем çителĕклĕ вĕрентсе хатĕрлемелле, строительсен пурнăçпа йăла тата культура условийĕсене лайăхлатмалла.

Пирĕн республика 1952 çулхи капитальнăй ĕçсем тумалли плана тултарма, партипе правительство панă пуян майсемпе пĕтĕмпех усă курма тивĕçлĕ.

Никитин юлташ докладĕ тăрăх прениre 13 çын тухса каларĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ **Волков** юлташ каланă тăрăх, иртнĕ çулта строительствăпа монтаж планне «Чăваштрой» трест, СССР Электропромышленность министерствин строительствăпа монтаж кантурĕ тата СССР Электростанцисен министерствин строительство участокĕ çеç тултарнă. Ытти строительство организацийĕсем плана тултараймасни вĕсене хуçалăх тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр ертсе пынинчен, çавăн пекех ВКП(б) хула комитечĕ стройкăсенчи парторганизацисене тивĕçлĕ пулăшу паманнинчен килнĕ Волков юлташ уйрăм заказчиксем строительство планне тултарассишĕн ответлăх туйманнине, строительство организацийĕсене сахал пулăшнине палăртать. Аш-какай тресчĕпе Ашкакайпа сĕт-çу промышленность министерствин строительствăпа монтаж управленийĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемеççĕ. Педагогика институчĕ, республикăри больница, 38 хваттерлĕ çурт валли техникăллă документсем халиччен те туса хатĕрлемен. Техникăллă документсем çукки строительство ĕçне сарма кансĕрлет. Кăçал пир-авăр комбинатне тума чул нумай кирлĕ. Республикăра чул хатĕрлес ĕçе йĕркелемен. ВКП(б) обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн асăннă çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

«Чăваштрой» трест управляющийĕ **Куприянов** юлташ пленума трест коллективĕ 1952 çулхи строительство планне срокчен тултарма социализмлă обязательство йышăнни çинчен пĕлтерет. Вăл заказчиксем техникăллă документсем вăхăтра тăратма тăрăшманнине палăртать. Трест педагогика институчĕ валли çĕнĕ çуртсем лартма договор тунă, анчах проектпа сметăсем хатĕр марринпе ĕçе тытăнма май çук. Вăл Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕ енĕпе строительство деталĕсен производствине йĕркелеме, строительство организацийĕсем валли чулпа грави ытларах хатĕрлеме кирлине палăртать. Республикăри стройкăсенче механизмсем нумай, анчах вĕсемпе туллин усă курмаççĕ. Хăшпĕр организацисенче, сăмахран, экскаваторсем ахаль лараççĕ, çав вăхăтрах тепĕр организацисенче çĕре алăпа чавса купалаççĕ. ВКП(б) обкомĕн механизмсемпе туллин усă курас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

СССР Электропромышленность министерствин строительствăпа монтаж управленийĕн начальникĕ **Юдкович** юлташ проект хатĕрлекен организацисене, тĕслĕхрен, Чăвашпроекта тата архитектура органĕсене куллентхи ыйтусене çийĕнчех татса паманшăн критикăлать, асăннă организацисене кадрсем тĕлĕшпе çирĕплетме сĕнет.

Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх министрĕ **Чичикин** юлташ министерствăна пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем туса лартас ĕçе çителĕксĕр ертсе пынăшăн пленумра критикăлани тĕрĕс, тесе йышăнать. Министерствăна пăхăнса тăракан Чăвашпроект кантурĕ проектсенче час-часах йăнăшсем тăвать, строительство организацийĕсен вара çав йăнăшсене тӳрлетме тивет. «Чăваштрой» трестра штурмовщинăна пĕтермен. Штурмовщина строительство ĕçĕсен пахалăхне чакарать. Строительство ĕçĕсем тума уйăрса панă укçа-тенкĕпе кăçал çителĕксĕр усă кураççĕ, çĕнĕ çуртсем лартма вырăн уйăрса парас ыйтăва вăхăтра татса памаççĕ. Сăмахран, Улатăр райсовет исполкомĕ участок уйăрса паманнипе пула коммунальнăй электростанцие тума тытăнма май çук. Чичикин юлташ республикăра проектсене Архитектура управленийĕнче регистрацилемесĕр çуртсем лартнă тĕслĕхсем пуррине палăртать. Çавăн пек тĕслĕхсем Улатăрпа Шупашкар хулисенче пур. Сосновка поселокĕнче çуртсене плансăр лартаççĕ. Çуртсем лартмалли йĕркене çирĕп сыхлани кирлĕ.

ВКП(б) Куславкка райком секретарĕ **Петрухин** юлташ парти райкомĕ çуртсем тăвакан заводри строительство ĕçне кирлĕ пек тĕрĕслесе тăманнине йышăнчĕ. Заводри парторганизаци ĕçĕнче те строительство ыйтăвĕсем кирлĕ вырăн йышăнман. Çавăн пирки завод строительство планне тултарман. Халĕ çав йăнăша тӳрлетме мерăсем йышăннă. Петрухин юлташ строительство организацийĕсен руководителĕсене Куславккари чул хатĕрлекен тата известь тăвакан предприяти кăларнă чула турттарса кайма ыйтать, строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленине предприятири йывăр ĕçсене механизацилеме тăрăшманшăн критикăлать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председатель заместителĕ **Репкин** юлташ строительство организацийĕсен руководителĕсемпе парторганизацисем строительство хакне чакарассишĕн кĕрешме тивĕçли çинчен калать. Перекетлĕх режимне çирĕплетесси, материалсемпе тата инструментсемпе тĕрĕс усă курасси, ĕç пахалăхне лайăхлатасси, çуртсене çĕнĕ конструкцисем тăрăх тăвасси строительсен йăлине кĕмелле. Çуртсен хакне чакарма строительство организацийĕсене проект тăвакан учрежденисемпе строительство материалĕсем туса кăларакан предприятисем нумай пулăшма пултараççĕ.

Чăвашоблпрофсовет председателĕ **Романов** юлташ республикăри профсоюз организацийĕсем строительство ыйтăвĕсемпе ытларах интересленме тытăннине палăртать. Апла пулин те, Чăвашоблпрофсоветпа профсоюз обкомĕсем стройкăсенчи профсоюз организацийĕсене малта пыракансен опычĕсене пĕтĕçтерсе сарма, строительство хăвăртлăхне ӳстерессишĕн, унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн социализмлă ăмăртăва вăйлатма çителĕклĕ пулăшмаççĕ. Романов юлташ стройкăсенчи парторганизацисем профсоюз организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине палăртать. Пир-авăр комбинатĕнче постройком председателĕ Иванов юлташ строительствăпа монтаж управленийĕн начальникĕ пулнă Гапуаин юлташпа килĕштерсе ĕçлемен, анчах партбюро çав çитменлĕхе пĕтерме тăрăшман, постройкома социализмлă ăмăртăва ВЦСПС-ăн VI-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх çĕнĕлле ертсе пыма тата ытти ĕçсене йĕркелеме пулăшман. ВКП(б) обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн стройкăсенче профсоюз организацийĕсен ĕçне лайăхлатма ытларах пулăшмалла, коллективлă договорсене мĕнле пурнăça кĕртнине, социализмлă ăмăртăва мĕнле йĕркеленине тимлĕрех интересленмелле, — тет Романов юлташ.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕ **Мартынов** юлташ ялхуçалăхĕнче капитальнăй ĕçсем тума уйăрса панă укçа-тенкĕпе çителĕксĕр усă курнине палăртать. ВКП(б) обкомĕ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тата нумай райкомсем капитальнăй ĕçсем пирки ялхуçалăх работникĕсенчен ответлăх сахал ыйтаççĕ. МТС-сенче мастерскойсемпе складсем тата ветеринари лечебницисемпе амбулаторисем, инкубатор станцийĕсем тата ыттисене те тăвасси çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пыни пуринчен ытла çакăнтан килет те ĕнтĕ. Чăваш АССР Госпланĕ (председателĕ Тощев юлташ) ялхуçалăхĕнчи строительство çине тĕрĕс мар пăхать, вăл ялхуçалăх органĕсене вырăнти строительство материалĕсем, уйрăмах кирпĕч, пуринчен те кайран çеç уйăрса парать, — тет Мартынов юлташ.

Канашри вагонсем юсакан завод начальникĕ **Трухин** юлташ иртнĕ çулта завод пурăнмалли çуртсем туса лартмалли плана тултарманнишĕн предприяти руководителĕсемпе заводри парторганизаци айăпне палăртать. Трухин юлташ Чăваш АССР Госпланне завода вырăнти строительство материалĕсем çителĕклĕ уйăрса паманшăн, Чăваш АССР Архитектура управленине — Канаш хулинче çĕнĕ çуртсем лартмалли вырăна халиччен çирĕплетсе паманшăн критикăлать. Трухин юлташ республикăри промысла кооперацийĕ енĕпе строительство материалĕсем нумайрах туса кăларма кирлĕ, тесе шутлать.

Пир-авăр комбинатĕнчи партбюро секретарĕ **Курапина** юлташ строительствăри парторганизаци юлашки вăхăтра мĕнле ĕçсем туса иртерни çинчен калать. Парторганизаци йышĕ икĕ хута яхăн ӳсnĕ. Коммунистсем строительствăра малта пыраççĕ, нумайăшĕ агитациллĕ ĕçе активлă хутшăнаççĕ, социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыраççĕ. Анчах, апла пулин те, строительствăри парторганизаци ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пур, вĕсем çинчен пленумра тĕрĕс палăртрĕç. Агитациллĕ-массăллă ĕçе, уйрăмах наглядлăй агитацие, анлă сарман. Парторганизаци кашни цехра, кашни участокра талăкри графика тултарса пымалла тăвайман, ĕçри брака пĕтереймен. Уйрăм ыйтусене татса пама парторганизацие ВКП(б) обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пулăшмалла. Анчах ВКП(б) обком работникĕсем стройкăра сайра-хутра çеç пулаççĕ, вĕсем доклад тума е решени йышăнма фактсем кирлĕ пулсан кăна пыраççĕ. Сăмахран, пленум уçăлас умĕн промышленноçпа транспорт пайĕн инструкторĕ Дмитриев юлташ стройкăра пулчĕ. Вăл мана, партбюро секретарьне, палăртнă çитменлĕхсем çинчен каласа кăтартмарĕ. ВКП(б) обком секретарĕ Никитин юлташ строительствăра талăкри графика мĕнле пурнăçланипе çеç интересленет. Обком секретарĕн тата промышленноçпа транспорт пайĕн партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе мĕнле йĕркеленипе те интересленес пулать. Обкомăн тепĕр пысăк çитменлĕхĕ вăл — строительство организацине руководительсем енĕпе çирĕплетес ыйтăва çийĕнчех татса паманни. ВКП(б) хула комитечĕ пир-авăр комбинатне тăвас тĕлĕшпе сахал мар решенисем йышăнать, анчах çав решенисем хăшпĕр чухне пирĕн пата çитмеççĕ, тет Курапина юлташ.

ВКП(б) Канаш хула комитечĕн секретарĕ **Новиков** юлташ хула комитетне капитальнăй ĕçсене çителĕксĕр ертсе пынăшăн тĕрĕс критикăлаççĕ, тесе йышăнать. Вăл хула комитечĕ 1952 çулхи строительство планне ăнăçлă тултарма мĕнле мерăсем йышăнни çинчен калать. Аш-какай тата сĕт-çу промышленность министерствин управленийĕ Канашра çу завочĕ тăвать. Ку ĕç уйрăмах япăх пырать. Стройкăра пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен обкомăн промышленноçпа транспорт пайне темиçе хутчен те пĕлтернĕ. Анчах çав çитменлĕхсене пĕтерме халиччен те татăклă мерăсем йышăнман. Строительствăпа монтаж управленийĕнче халĕ çĕнĕ руководитель, ăна пулăшас, унăн ĕçне тăтăшах тĕрĕслес пулать. Республикăра Канашри моторсем юсакан заводăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Кунта чугун шăратакан цех лартмалла. Ăна тума пĕрене кирлĕ. Çав материала ниçта та тупма пултарайман пирки эпир ВКП(б) обком секретарĕ Ахазов юлташпа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ Афанасьев юлташ патне çырса ятăмăр. Ахазовпа Афанасьев юлташсем пирĕн çырăва вуланă-и, вуламан-и — пĕлместĕп, анчах эпир Госпланран Тощев юлташ алă пуснă çыру: йывăç материалсем уйăрса пама пултараймастпăр, — тесе пĕлтерекен стандартлă ответ илтĕмĕр. Новиков юлташ республикăри пичет строительство çинчен сахал çырнине, стахановецсен опытне сарманнине палăртать.

Кунсăр пуçнĕ, Никитин юлташ докладĕ тăрăх прениre Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи строительствăпа монтаж управленийĕн начальникĕ **Есипов** тата Çĕрпӳ райисполком председателĕ **Арзамасов** юлташсем тухса каларĕç.

* * *

Сӳтсе явнă ыйтупа пленум тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Агитаторсен шкулĕ

Елчĕк районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци агитаторсен шкулĕ ĕçлеме пуçларĕ. Партбюро çирĕплетнĕ план тăрăх, шкулта кашни эрнере пĕр заняти пулать. Занятисем иртерме сутă та таса пӳлĕм уйăрнă.

Шкулта пурĕ 25 агитатор вĕренмелле. Вĕсенчен нумайăшĕ агитациллĕ-массăллă ĕçе халĕ кăна хутшăнма пуçланă. Чылай юлташсен опыт пысăк мар-ха.

ВКП(б) райкомĕпе партбюро, агитаторсен шкулĕ валли вĕренӳ программине тунă чухне, опытлă агитаторсен сĕнĕвĕсене шута илнĕ. Занятисен планĕнче темăсене, миçе сехет хушши вĕренмеллине, занятие хăçан тата камăн иртермеллине кăтартнă. Шкул руководителĕ коммунист А. Пушков юлташ (пуçламăш шкул заведующийĕ) планра палăртнă ĕçсене пурнăçланине паллă туса пырать.

Февралĕн 20-мĕшĕнче шкулта малтанхи заняти пулса иртрĕ. Агитаторсем пурте вăхăтра пухăнчĕç. Шкулта вĕренекен агитаторсемсĕр пуçне, малтанхи занятие опытлă агитаторсем те пычĕç. Партбюро секретарĕ Добронравов юлташ агитаторсен шкулĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен, большевикла агитацин уйрăмлăхĕсем тата унăн пĕлтерĕшĕ çинчен тĕплĕ каласа пачĕ.

Шкулта вĕренекенсем агитациллĕ-массăллă ĕçĕн мелĕсемпе паллашаççĕ, ĕççыннисем хушшинче калаçусем, докладсем иртерме хатĕрленеççĕ, лайăх агитаторсен опычĕпе паллашаççĕ. Кунта вĕсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне тата культурăллă тавракурăмне ӳстереççĕ, политикăллă калаçусем иртерме хатĕрленеççĕ, куллентхи материалсемпе лайăхрах усă курма хăнăхаççĕ.

План тăрăх, агитаторсен шкулĕнче политикăпа экономика тата производство ыйтăвĕсене, политикăллă тата экономикăллă карттăсене, агитациллĕ ĕçĕн методикипе практикине вĕренеççĕ. Шкула çӳрекен агитаторсем теориллĕ ыйтусене вĕреннипе пĕрлех практикăллă занятисем иртереççĕ. Сăмахран, çавăн пек пĕр занятире уй-хир бригадисене вăйлă тырпул туса илмелли плана пăхса тухаççĕ, çавна май агитаторсем умĕнче тăракан конкретнăй задачăсем çинчен сӳтсе яваççĕ. Тепĕр занятире колхозри стена хаçат ĕçĕпе паллашаççĕ, бригадăсенче боевой листоксене йĕркелесе кăларма вĕренеççĕ.

Малтанхи кун, занятин юлашки секечĕнче, шкулта вĕренекенсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç, партбюро агитаторсен шкулне уçма йышăннине пĕтĕм кăмăлтан ырларĕç.

— Агитаторсен шкулне уçни, — тет Ф. Иванов юлташ, — пире ĕçре пысăк пулăшу парĕ. Пирĕн пурнăç çав тери хăвăрт улшăнса пырать. Эпир, агитаторсем, Тăван çĕршыври хыпарсене тата коммунизмăн аслă стройкисем çинчен ĕçсыннисене вăхăтра пĕлтерсе тăма тивĕç. Анчах хамăрăн ăсталăха ӳстермесĕр эпир çак тивĕçе тӳрре кăлараймăпăр.

Ватă колхозник Алексей Нилович Козлов юлташ халĕ колхоз производствинче тăрăшса ĕçлет. Хăйĕн большевикла витĕмлĕ сăмахĕсемпе колхозниксене ĕçре хавхалантарса пырать. Ватă колхозник агитаторсен шкулне уçнине пĕтĕм кăмăлтан ырлать. Вăл хăйне шкулта вĕрентме чĕннĕшĕн савăнать, ытти агитаторсене занятисене йĕркеллĕн, пĕр сиктермесĕр çӳреме чĕнет.

Малтанхи занятире ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Воробьев юлташ «РСФСР хуçалăхне малалла аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни çинчен» РСФСР Статистика Управленийĕн пĕлтерĕвĕ тăрăх калаçу иртерчĕ. Вăл агитаторсене çак тема тăрăх уй-хир бригадисенче, фермăсенче тата колхозăн ытти участокĕсенче ĕçлекенсем хушшинче калаçусене мĕнле майпа иртермелли çинчен, мĕнле материалсемпе тата литературăпа усă курмалли çинчен тĕплĕ каласа пачĕ.

Çитес заняти февралĕн 27-мĕшĕнче пулать. Унта агитаторсем «Коммунизмăн аслă стройкисем» тема тăрăх тата «ССР Союзĕн картти» çинчен лекцисем итлеççĕ. Лекцисене çичĕ çул вĕренмелли шкулти географипе истори преподавателĕ Иванов юлташ иртерет.

Н. НИКИТИН.
(Хамăр корр.).

Çĕнĕ кĕнекесем

Çак кунсенче Чăваш АССР государство издательствинче çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухрĕç:

Д. Медведев — Ровно патĕнче. Уйăп Мишши куçарнă. Ӳкерчĕкĕсене Ф. Осипов тунă. Кĕнекере 248 стр., тиражĕ 5.000 экз., хакĕ 5 тенкĕ.

Н. В. Гоголь — Повеçсем, М. Рубцов куçарнă. «Петербург повеçĕсем» çинчен комментариллĕ статья кĕртнĕ. Ӳкерчĕкĕсене Л. Осинский тунă. Кĕнекере 160 стр., тиражĕ 5.000 экз., хакĕ 3 тен. 55 пус.

С. Михалков — Манăн киле каяс килет. Виçĕ актлă тăхăр картиналлă, прологпа эпилоглă драма. Н. Матюхин куçарнă, сăввисене С. Шавлы куçарнă. Кĕнекере 56 стр., тиражĕ 4.000 экз., хакĕ 80 пус.

Вырăсла:

Леонид Аганов — Золотая цепочка, чăвашларан Алексей Далекий куçарнă, хуплашкипе шалти Ӳкерчĕкĕсене В. Макаров художник тунă. Кĕнекере 172 стр., тиражĕ 10.000 экз. Хакĕ 4 тен. 60 пус.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Поселок Совечĕн яланхи комиссийĕсем

Сосновка поселок Совечĕ яланхи комиссисемпе тачă çыхăнса ĕçлет, вĕсен ĕçри пултарулăхне ӳстерет. Комиссисем ĕççыннисен ыйтăвĕсене татса парас ĕçе активлă хутшăнаççĕ, поселок Советне куллен пулăшаççĕ. Уйрăмах бюджетпа финанс комиссийĕ паха тĕслĕх кăтартать. Поселок Совечĕн бюджетне ăнăçлă пурнăçлас шутпа, вăл ларусемпе канашлусем ирттерет, финанс ĕçне лайăхлатмалли майсене кăтартса парать.

Комисси членĕсем предприятисемпе учрежденисен ĕçĕсене лайăх пĕлсе тăраççĕ, вĕсене финанс хуçалăхне лайăхлатма пулăшаççĕ, хуçалăх руководителĕсене предприятири резервсемпе туллин усă курма паха сĕнӳсем параççĕ. Комисси членĕсем обществăллă ĕçе юратса, пĕтĕм пултарулăха хурса тăваççĕ. Хуçалăх ыйтăвĕсене татса парас ĕçре бюджетпа финанс комиссийĕ пысăк вăй пулса тăрать.

Комисси председателĕ М. Родионов юлташ поселок Совечĕн сессийĕсенче, исполком ларăвĕсенче финанс ĕçĕ çинчен содокладсем туса парать, ситменлĕхсене вăхăтра пĕтерме поселок Совечĕ умне ыйтусем лартать.

Иртнĕ çулта халăха кино кăтартас ĕç начар пулса пынă: билетсене вăхăтра сутман, сеанссем мĕн вăхăтра пулассине пĕлтермен. Çавна пула кино кăтартнипе укçа-тенкĕ цухмалли плана кварталтан квартала тултарман. М. Родионов юлташ çак ситменлĕхе поселок Совечĕн сессийĕнче палăртрĕ, исполкома ку ĕçе йĕркелеме сĕнӳ пачĕ. Бюджетпа финанс комиссийĕн председателĕ асăрхаттарнă тăрăх сесси тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Халĕ кино кăтартас ĕç чылай лайăхланчĕ: поселокри клубсенче тăтăшах кино пулать, билетсене ик-виçĕ кун малтан сутаççĕ, кинокартинăсем пулассине вăхăтра пĕлтереççĕ. Çапла вара 1951 çулта кино кăтартнинчен илекен тупăш планпа пăхниинчен икĕ хута ытла ӳсрĕ.

Яланхи комисси финанс планне тултарас ĕçе активлă хутшăннипе поселок Совечĕ иртнĕ çулхи бюджета тупăшсем енĕпе 109 процент, расходсем енĕпе 105 процент тултарчĕ.

Поселок Совечĕн культурăпа çутĕç енĕпе ĕçлекен яланхи комисси те хăйĕн ĕçĕсене лайăх туса пырать. Вăл 5 депутата тата 31 активиста пĕрлештерсе тăрать. Комисси кашни кварталтах ĕç планĕ тăвать, ăна çирĕп пурнăçласа пырать. Комисси ĕççыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе час-часах канашлусем ирттерет. вĕсенче чылай ыйтусем сӳтсе явать. Шкулсен, клубсен, библиотекăн ĕçĕсене куллен тĕрĕслеççĕ, вĕсене комисси членĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Комисси членĕсем шкул ачисем вĕренӳре мĕнле ĕлкĕрсе пынине, вĕсене кирлĕ условисем çителĕклĕ туса парассипе интересленеççĕ. Вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас шутпа комисси ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе канашлусем ирттерет, массăллă-ăнлантарулă ĕçе анлă сарса пырать.

Культурăпа çутĕç комиссийе Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ Н. Степанова юлташ ертсе пырать. Унăн опыт пысăк. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тĕплĕ тăвать. Вăл шкул ачисен пĕлӳлĕхне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Поселок Совечĕ депутатсен, яланхи комиссисен, активăн творчествăллă пултарулăхĕпе пуçарулăхĕ çине таянса ĕçленипе культурăпа çутĕç тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Шкулсене тĕпрен юсанă, вĕсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ, вулав çурчĕсемпе библиотекăсен ĕçĕсене йĕркеленĕ, ĕççыннисен культурăллă канăвне лайăхрах организациленĕ.

Библиотекăра çĕнĕ кĕнекесен хисепĕ ӳссе пырать, вулакансен шучĕ чылай нумайланчĕ. Клубсенче спектакльсем кăтартаççĕ, лекцисемпе докладсем ирттереççĕ.

Поселок Совечĕн сессийĕсенче яланхи комиссисен отчечĕсене итлеççĕ, вĕсене пулăшма тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Комиссисен кварталти ĕç планĕ мĕнле пурнăçланнине пĕрмай тĕрĕсленипе поселок Совечĕ вĕсен ĕçне чылай лайăхлатрĕ.

Анчах яланхи комиссисем пурте хăйсен ĕçĕсене çителĕклĕ туса пымаççĕ. Хăшпĕр комисси членĕсем шанса панă ĕç çине сӳрĕккĕн пăхни курăнать. Сăмахран, суту-илӳ комиссийĕ (председателĕ З. Истухова юлташ) начар ĕçлет, Суту-илӳ организацийĕсене пулăшассине комисси тивĕçлипе йĕркелемен, унăн актив çителĕксĕр.

Благоустройство комиссийĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Поселокри кĕперсемпе çулсене юсаса çитермен, поселокăн сăн-сăпатне илемлетес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туман.

Поселок Совечĕ умĕнче кăçал тата та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Хуçалăхпа культура строительствине хăвăрт малалла аталантарас тесен, поселок Совечĕн чылай ĕçсем туса ирттермелле. Лайăх ĕçлекен яланхи комиссисен паха опытне сарни, депутатсен ĕçри активлăхне ӳстерни, массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетни хуçалăхпа культура строительствинче тăракан задачăсене ӳсĕлă пурнăçлама пулăшать.

С. МИРОНОВ,
ĕççынни депутачĕсен Сосновка поселок Совет исполкомĕн председателĕ.

Сесси колхоз председателĕсен отчечĕсене итлерĕ

ЧУРАЧĂК. Çак кунсенче Пысăк Чăрăш ял Совечĕн сессийĕ колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен колхоз председателĕсен отчечĕсене итлерĕ.

«Победа» колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Кунта нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕсĕр пуçне пур вăрлăхсене те çителĕклĕ хатĕрленĕ. Тулă, сĕлĕ тата ытти вăрлăхсене тасатса сортланă. Селекци станцийĕпе килĕшнĕ тăрăх, колхоз кăçал 5 гектар çинче сăнавлă çĕнĕ йышши сортлă тулă, 3 гектар çинче—пăрçа акать.

Колхоз тимĕрçисем А. Кузнецовпа П. Семенов юлташсем плугсемпе сеялкăсене юсаса çитерчĕ.

Çав вăхăтрах Жланов ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Унта вăрлăхсене сортласа çитермен. Планпа 20 центнер ытла сортлă вăрлăх улăштарса илме палăртнă, анчах ăна халиччен те улăштарман. Ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман. Машинăсем юр айĕнче лараççĕ. Колхоз правленийĕ колхозниксене агротехника наукине вĕрентес ĕçе манăça хăварнă.

Сесси колхозсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пур ĕçсене те мартăн 1-мĕшĕччен туса çитерме хушрĕ. **П. ПАВЛОВ.**

Муркаш районĕнчи ĕççыннисемпе обществăллă организацисен пуçарăвне йышăнса

Шкула пулăшасси—общественность ĕçĕ

ВĂРМАР. Районти общественность, ял Совечĕсемпе колхозсем çамрăксене обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентмелли закона ăнăçлăн пурнăçлас тесе шкулсене пур майсемпе те пулăшса пыраççĕ. Общественность пулăшнипе вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ шкулсем 1951—52-мĕш вĕренӳ çулĕн малтанхи çур çулне лайăх кăтартусемпе вĕçлерĕç.

Малта пыракан шкулсем кăçал та, Муркаш районĕнчи ĕççыннисемпе обществăллă организацисем пуçарнă ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ, 1952—53-мĕш вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕç.

Мăнçырмари çичĕ çул вĕренмелли шкул (директорĕ А. Васильев юлташ) 1952—53-мĕш вĕренӳ çулне хатĕрленмелли план тунă. Шкул çуртне кивелнĕ пирки кунта кăçал 16 класлă çĕнĕ шкул çурчĕ тăваççĕ. «Правда» колхоз членĕсем шкул çуртне тума пысăк пулăшу параççĕ. Паянхи куна вĕсем 180 кубометр чул кăларса хатĕрленĕ. Йĕпреç вăрманĕнче касса хунă 150 фестметр йывăçа çак кунсенче турттарма тытăнаççĕ.

Шкул, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май, кăçал пĕрремĕш класа пымалли ачасене пурне те шута илсе тухнă, наглядлăй пособисемпе тетрадьсем çĕнĕрен чылай илсе хунă. Çуркунне шкул пахчине пысăклатса улма-çырла йывăççисем лартаççĕ.

Тикеш ял Советне кĕрекен «Хĕрлĕ Кĕтне» колхоз членĕсем те шкула хастарлăн пулăшаççĕ. Вĕсем кăçал хăйсен вайĕпе ялти пуçламăш шкул валли тăвата класлă çĕнĕ çурт туса параççĕ. Шкул тума йывăç çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Кунсăр пуçне колхозниксем партăсем, класс хăмисем юсаса параççĕ. Шкулпа учительсен хваттерĕсем валли вутă çителĕклĕ илсе килеççĕ.

Ентриялĕнче çичĕ çул вĕренмелли типовой шкул çурчĕ тума пуçăнаççĕ. Пысăк Енкассинчи вăтам шкулăн кивелнĕ çуртне тĕпрен юсаççĕ. «Свобода» колхоз членĕсем хăйсен вăйĕпе ялти пуçламăш шкул çуртне тĕпрен юсама пулнă. Районти шкул çурчĕсене юсама тата çĕнĕрен тума пурĕ 800 фестметр йывăç уйăрса панă.

Муркаш районĕнчи общественносăн чĕнĕвне сӳтсе явсан, Вăрмарти вăтам шкул, Эçпепери, Ĕнешпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли вутă хатĕрлеме тытăнчĕç.

Районти предприятисемпе артельсем те шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес ĕçре пулăшаççĕ. Сĕтĕл-пукан тăвакан фабрика коллективĕ Вăрмарти вăтам шкула пулăшас тĕлĕшпе воскресник туса ирттерет. Çав кун фабрикăри комсомолецсем шкул оборудованине юсаса параççĕ.

Промкомбинат шкулсем валли партăсемпе класри счетсем туса хатĕрлет. Суту-илӳ организацийĕсем шкулсене кирлĕ таварсем (цемент, известь, пăта, кантăк, сăрăсем т. ыт. те) чылай кӳрсе килеççĕ.

И. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленетпĕр

ШĂХАСАН. Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Муркаш районĕнчи ĕççыннисемпе обществăллă организацисем шкулсене çĕнĕ, 1952—53-мĕш вĕренӳ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каланине хăйсен пухăвĕнче тĕплĕн сӳтсе яврĕç.

— Эпир иртнĕ çул та шкула пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Пирĕн шкулта ачасене вĕренме лайăх условисем туса панă,— терĕç колхозниксем.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç çинчен сӳтсе явнă май, колхозниксем нумай паха сĕнӳсем пачĕç. Колхоз социализмлă обязательство илчĕ. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне шкула çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле, шкулпа учительсен хваттерĕсем валли августăн 20-мĕшĕ тĕлне вутă çителĕклĕ кӳрсе памалла, августăн 25-мĕшĕ тĕлне партăсемпе сĕтел-пукансене тата класс хăмисене юсаса çитермелле.

Г. ЛУЧ.

* * *

ОКТЯБРЬСКИ. Туçари çичĕ çул вĕренмелли шкул пурне те обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентмелли закона ăнăçлă пурнăçлать. Халĕ кунта 250 ача вĕренет. Вĕренекенсен йышĕ çултан-çул ӳссе пырать.

— Шкулта ачасене вĕренме тивĕçлĕ условисем туса парасси — пирĕн тăван ĕç,— теççĕ колхозниксем. «Аниш» колхоз членĕсем çак кунсенче хăйсен пухăвĕнче Муркаш районĕнчи ĕççыннисемпе обществăллă организацисем шкулсене çĕнĕ, 1952—53-мĕш вĕренӳ çулне хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕннине тимлĕ сӳтсе яврĕç. Колхозниксем шкула çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлеме лайăх пулăшма пулчĕç. Пуху хыççăн «Аниш» колхозпа Буденный ячĕпе тăракан колхозран шкул валли кирлĕ йывăç касса хатĕрлеме пурĕ 22 çын лавпа тухса кайнă.

Л. ПАВЛОВА.

* * *

ЕТĔРНЕ, февралĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Шкулсене çĕнĕ, 1952—53-мĕш вĕренӳ çулне хатĕрлеме пулăшасси çинчен пур ял Совечĕсенче те сӳтсе яваççĕ. Колхозсем ку тĕлĕшпе социализмлă обязательствăсем йышăнаççĕ.

Кăкшăмри çичĕ çул вĕренмелли шкулта кăçал 160 ача вырнаçмалăх 4 пӳлĕмлĕ çурт туса лартмалла. Ку çурта тума Кăкшăмри Ильич ячĕпе тăракан, Шĕмĕртенри «Ленинский завет» колхоз колхозникĕсем пулăшаççĕ.

Кунсăр пуçне районта икĕ шкул çуртне—Сарьялти çичĕ çул вĕренмелли шкулпа Чурпайри вăтам шкул çурчĕсене тĕпрен юсама палăртнă. Шкул çурчĕсем тăвас тата киввисене юсас ĕçсене май уйăхĕ тĕлне туса пĕтерме шутлатпăр. Строительство материалĕсене çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

А. КРАСНОВ,
районти çутĕç пайĕн заведующийĕ.

Чугун çул работникĕсен тивĕçĕ

Хусан чугун çулĕн Улатăр уйрăмĕнче ĕçлекенсем хушшинче ĕçре хастарлăхпа пуçарулăх кăтартакан командирсемпе стахановец-диспетчерсем, пăравус машинисчĕсем, поезд йĕркелекенсем, дежурнăйсем, кондукторсем, стрелочниксем сĕршерĕн шутланаççĕ.

Ку енĕпе уйрăмах Улатăр деповĕнчи машинистсене: Казяев, Ратников, Бучаев, Голованов юлташсене палăртмалла. Вĕсем Фурмавнин, Должикова диспетчерсемпе çыхăнса ĕçлесе, поездсене çирĕп график тăрăх илсе çӳреççĕ.

Вагонсене пăхса тухакан Максимов, чугун çул обходчикĕ Мишин, поезд çиччи вагон мастерĕсем Кормишин, Вашуркин, Курлышкин юлташсем те хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ.

Транспортра кашни работникăн ĕçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Малта пыракан коллективсем хăйсен ĕçне пур службăри работниксен, пур звеносен ĕçĕпе таччăн çыхăнтарса туса пыраççĕ, Урăхла пулма та пултараймасть. Плана тултарасси кашни смена, бригада, кашни работник мĕнле ĕçленинчен килет.

Калас пулать, çанталăк сивĕтни чугун çул уйрăмĕн ĕçĕнче чылай чăрмавсем кӳчĕ. Поездсене илсе çӳретмелли график çак кунсенче пурнăçланса пыраймасть-ха. Йĕпреç, Буинск, Кирс, Алтышево станцийĕсем грузсем тиессине нумай чакарчĕç. Брак ӳсрĕ. Локомотив паркне, кадрсене хĕле кирлĕ пек хатĕрлемен пирки пăравуссене юсасси, поездсем кирлĕ вырăна кая юлса çитесси нумайланчĕ.

Улатăр деповĕнчи Спиридоновпа Тюрахин машинистсен айăпĕпе пĕр кун хушшинче кăна вуншар поезд йĕркеллĕ çӳреймен. Ку вăл поездсене вăхăтра илсе çитерменнинчен, ытти поездсене иртсе каймалла май пулманнинчен килнĕ.

Малтанхи сил-тăмансене Улатăрти чугун çул дистанцийĕн руководителĕсем кĕтмен. Дистанцин 10-мĕш околоткĕнче, юр хӳсе каякан вырăнсене хăй вăхăтĕнче щитсем кирлĕ чухлĕ лартса тухманнине пула, чугун çул линийĕ юр айне пулнă. Ку поездсене çӳреме чăрмантарнă.

Çак фактсем чугун çул дистанци руководителĕсен—Мешков, Шигаев, Мякотин юлташсен ĕçри ответсăрлăхне кăтартаççĕ. Нумай командирсем, ревизорсемпе инструкторсем, парти, профсоюз организацийĕсен руководителĕсем чугун çул работникĕсем хушшинчи ĕç дисциплинине хавшани çине сахал пăхаççĕ, коллективсене хĕллехи йывăрлăхсене хирĕç кĕрешме çителĕксĕр мобилизацилеççĕ.

Уйрăмри чугун çул работникĕсен задачи—поездсем çӳретмелли графика пурнăçлассишĕн, грузсем тиесе, пушатмалли ĕçе лайăхлатассишĕн кĕрешесси пулать.

Пăравус çинче ĕçлекенсене лайăх юсанлă локомотивсем вăхăтра парса тăмалла, поездсене хуть те мĕнле çанталăкра та çирĕп график тăрăх илсе çӳретмелле.

Чугун çул станцийĕсенче ĕçлекен командирсен поездсене йĕркеллĕ илсе çӳретессишĕн куллен тăрăшмалла. Поездсем станцисенче сехечĕ-сехечĕпе тăрасси пулмалла мар. Вырăнти грузсене вăхăтра тиесе ăсатмалла. Грузсене тиесе пушатас ĕçе кунĕн-çĕрĕн организацилени кирлĕ.

Вагонниксем составсене тĕрĕслессине пысăк пахалăхпа туни, вĕсене юсассине хăвăртлатни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Умра тăракан задачăсене пурнăçлас тесен малта пыракан ĕç меслечĕсемпе, пуринчен малтан, Судниковпа Щебликин, Жандаровăпа Агафонова меслечĕсемпе усă курни кирлĕ. Дербентпа Невинномыскри общественность поездсене йышăнас тата ăсатас ĕçе мĕнле пурнăçланнине массăллă контроллесе тăма йышăннă паха пуçарăва пур майсемпе те сарса пымалла. Çавăн пекех Ленинград çыннисем поездсене пысăк пахалăхпа йĕркелес енĕпе пуçарнă паха опыта чугун çул работникĕн яланах асра тытмалла.

Пăравуса таçăкра пилĕкçĕр километр чуптаракан машинистсен паха опытне уйрăмах пур çĕрте те анлă сармалла.

Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем хăйсен коллективĕсене хĕллехи йывăрлăхсене çĕнтерме мобилизацилемелле.

Чугун çул уйрăмĕн коллективĕн йывăрлăхсене çĕнтерме вăйсем çителĕклĕ. Социализмлă ăмăртăва анлă сарсан, пур резервсемпе те пĕлсе усă курсан, коллектив чугун çул работникĕсем Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлама пултарĕ.

А. МАКАРОВ,
Улатăр чугун çул уйрăмĕн политотдел начальникĕн заместителĕ.

„Чăваш Коммуни“ хаçатра çырнă хыççăн

«ШИРОКОВ РЕВИЗОР»

«Чăваш Коммуни» хаçатра февралĕн 13-мĕшĕнче И. Волков çырнă «Широков ревизор» ятлă фельетон пичетленсе тухнăччĕ. Ĕççынни депутачĕсен Комсомольски район Совечĕн исполкомĕ Широкова Ульянов ячĕпе тăракан колхозри ревизи комисси членĕнчен кăларнă тесе, колхоз Широкова законсăр йĕркепе шутласа панă ĕçкунĕсем тăрăх тӳлемелле мар тума колхоз правленине хушнă тесе пĕлтерчĕ.

«ПЕРЕКЕТЛĔХ РЕЖИМНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИШĔН»

1951 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра «Перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн» ятлă статья пичетленнĕччĕ. ВКП(б) Канаш хула комитечĕ статьяра асăннă çитменлĕхсене пĕтересси шĕн, производствăри перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн вагонсем юсакан завод коллективĕ тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Статьяра асăннă çитменлĕхсене пĕтересси çинчен рабочисемпе инженерла-техникла работниксен пухăвĕнче тата цех начальникĕсен канашлăвĕнче сӳтсе явнă. Завод коллективĕ январь уйăхĕнчи производство планне 102,1 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 100,6 процент тултарнă.

«ЧĂВАШТОРГ УЙРАМЕНЧИ «КОММЕРСАНТСЕМ»

Чăваштторг директорĕ Б. Никандров юлташ «Чăваштторг уйрăмĕнчи «коммерсантсем» ятлă статьяра (статья январĕн 29-мĕшĕнче пичетленнĕ) фактсене тĕрĕс кăтартни çинчен пĕлтерчĕ. Куславкка поселокĕнчи магазин заведующине Калашникована эрех тытнă çĕмрĕк кĕленчесене тултарса çу сутнăшăн, суту-илӳ йĕркине пăснăшăн ятланă тата малашне совет суту-илĕвĕн йĕркине пăсни палăрсан çирĕп ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарнă.

Совет субтропикĕсем

Хĕлле. Пăрлă океанран пуçласа кăнтăрти тусем патне çити юр выртать. Тусен тепĕр енне илсен вара унта йăлтах урăхла сăнсем. Кăвак та мăнаçлă хумханса выртакан тинĕс тата пĕлĕтелле кармашакан ту тăррисем хушшинче хĕвел ытарайми ăшшăн çутатать, ялан симĕс тумлă сад ешĕрет. Ку вăл—совет субтропикĕсем.

Совет субтропикĕсем Хура тинĕспе Кавказăн тĕп ту хырçин кăнтăр сĕвеклĕ хушшинче вырнаçнă.

Совет субтропикĕсем халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Совет Союзĕн хăйĕн чей, мандарин, лимон, апельсин тата ытти çавăн йышши паха симĕçсем нумай.

СССР-та çурçĕр енчи çанталăк анлă лаптăксем çине саралать. Тундрăпа тайга сĕршыв лаптăкĕн ытларахăш пайне йышăнаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ субтропиксем пурри пирĕншĕн питех те хаклă. Унта çулталăк тăршшĕпех ӳсентăран ешĕрсе çитĕнет.

Хальхи совет субтропикĕсем халăх сывлăхне упраса усрамалли чи лайăх вырăнсем шутланаççĕ. Аса илес пулсан, пĕр вăтăр çул каялла унта йăлтах урăхла пулнă. Çанталăк условийĕ тĕлĕшĕнчен питĕ ырă çĕрте тĕлли-паллисĕр кирлĕ-кирлĕ мар ӳсентăран кăна ӳснĕ. Колхидăра шурлăх тăнă. Тинĕс хĕрринче кăна тĕллĕн-тĕллĕн чей плантацийĕсем курăнкаланă, пĕр-пĕр сад ĕçне юратакан патĕнче лимон, мандарин çитĕннине курсан, кунти çынсем вара курман-илтмен япаларан тĕлĕннĕ пекех тĕлĕннĕ. Субтропиксенчи мандарин тата лимон йывăççисене Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азирен чи малтан вырăссен паллă сулсӳревçи Краснов илсе килнĕ. СССР-ăн хальхи субтропикĕсенче улма-çырла йышши симĕçсем сĕршер пин гектар çинче çитĕнеççĕ. Çакă вăл малта пыракан совет агробиологи наукин пысăк çитĕнĕвĕсенчен пĕри.

Пирĕн субтропиксем, ытти сĕршывсемпе танлаштарсан, чылай çурçĕртерехе вырнаçнă. Кунта хĕллехи сивĕсем те пулкалаççĕ, вĕсем хăшпĕр чухне ăшша юратакан симĕç йывăççисене хăртаççĕ. Цитрус тата субтропик йывăççисен сивве тӳсме пултаракан сорчĕсене тумалла пулнă. Ку тĕлĕшпе пирĕн мичуринецсем пысăк çитĕнӳ тунă, çĕнĕ сортсем нумай туса хатĕрленĕ. Ку çеç те мар, халĕ ученăйсем субтропик таврашĕнчен çурçĕрте çитĕнме пултаракан сортсем тăвас енĕпе те ăнăçлă ĕçлеççĕ. Çапла ĕнтĕ, субтропикри ӳсентăрансем пирки халиччехи пек шухăшлани—вĕсем питĕ шăрăх çĕрте çеç ӳсме пултараççĕ тени—пăрахăçа тухать. Совет субтропикĕсем çурçĕрелле ăнăçлă куçса пыраççĕ.

* * *

Батуми хули—совет субтропикĕсен чи кăнтăр енĕ. Вăл нӳрлĕх тĕлĕшĕнчен уйрăмах пуян. Кунта çулталăкра виçĕ пин миллиметра яхăн нӳр ӳкет. Илемлĕ те чаплă ӳсентăран ешĕрни те çавăн çинченех аса илтерет. Пур çĕрте те сип-симĕс. Тинĕсе инçене касăлса кĕрекен пысăк сăмсахра сутçанталăк илемĕ тата та пуянтарах. Ахалĕн мар вăл сăмсаха «Симĕс» сăмсах тесе ят панă. Сăмсах çинче питĕ чаплă ботаника сачĕ пур, унта тропик тата субтропик таврашĕнче çитĕнекен тĕмĕн тĕрлĕ ӳсентăран курма пулать. Садра паллă совет ботаникĕсем ĕçлеççĕ, вĕсем совет субтропикĕсем валли çĕнĕ ӳсентăрансем хăнăхтараççĕ, çĕнĕ, пысăк тухăçлă сортсем тăваççĕ.

Батуми таврашĕнче пысăк чей совхозĕ—Чавка вырнаçнă. Кунта «Грузи чейĕ» хатĕрлеççĕ, вăл Инди тата Цейлон чейĕсен чаплă сорчĕсем майлах.

„Тинĕс сыраçĕнчи кăшт сĕвекрех тӳремлĕхре чей плантацийĕн анлă вырăнĕсем. Мĕн тери илемлĕ сăнсем! Хĕрлĕ тăпра çинче чей тĕмĕсен сип çапнă пек тӳрĕ симĕс йĕрĕсем тăсăлаççĕ. Писетрен, тĕтĕм витĕр евĕр, тусен хуçăк йĕрĕсем курăнаççĕ.

Совхозра пухса кĕртекен чей çулçине çийĕнчех вырăнти чей фабрикине илсе пыраççĕ, фабрикăна техникăн хальхи çитĕнĕвĕсене шута илсе тунă.

Акă фабрикăн ытла пысăках мар сутă залĕ. Вăл ресторана аса илтерет. Варринче—шурă çипцитисемпе витнĕ пĕчĕк сĕтелсем. Вĕсем çинче чей чашăкĕсем лартса тухнă, чашăкĕсенчен шĕрпет шыв цăсĕ çĕкленет. Ку вăл пухса кĕртнĕ çулçăсенчен тунă çĕнĕ чей. Залра чей пахалăхне тĕрĕслес ĕç пырать. Çак ĕç наука тата практика тĕлĕшĕнчен те питĕ кирлĕ. Тĕрĕслесе, ăнласа цырсан кăна чей пахалăхне лайăхлатмалли майсене ăнăçлă кăтартса пама пулать.

Чавка совхоз сĕршыва совет чейĕн чи лайăх сорчĕсене парса тăрать. Ĕлĕк Чавкăра чее пĕчĕк плантаци çинчен çеç туса илнĕ, унăн пахалăхĕ те начар пулнă. Ăна «салтак чейĕ» тенĕ, мĕншĕн тесен вăл чее ыгларах патша çарĕн салтакĕсем валли ярса панă. Халĕ ĕнтĕ Чавка чей промышленносĕн центрĕ пулса тăчĕ, Кунта чей енĕпе наукăпа тĕпчев институчĕ ĕçлет. Унăн тĕп задачи—чейĕн чи паха сорчĕсене туса хатĕрлесси тата вĕсене çĕнĕ районсене сарса пымалла тăвасси. Сĕршывра чей плантацисем вуншар пин гектар йышăнаççĕ. Совет Союзĕн хăй валли чей çителĕклĕ. Çав вăхăтрах патша Российи ют сĕршывсенчен çуллен, ылтăнпа шутласан, 60 миллионшар тенкĕлĕх чей илсе тăнă.

Колхида. Кунта мандарин, лимон сачĕсем ешĕреççĕ. Симĕçсем пиçсе ситнĕ вăхăтра вĕсен йывăççисем ылтăн тĕслĕн çиçеççĕ. Çав паха садсене вĕçĕ-хĕррисĕр шурлăх пулнă вырăнсене типĕтнĕ хыççăн лартса çитĕнтернĕ. Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра кăна кунта вăтăр пин гектара яхăн шурлăх типĕтнĕ. Пысăк тухăç паракан сĕр çинче грейпфрут совхозĕ тунă. Грейпфрут—цитрус йышши ӳсентăран, унăн симĕçĕ питĕ тутлă, сывлăхшăн усăллă, вăл вăтам арбуз пысăкĕш пулать.

Грейпфрут сачĕ. Виçĕ çулхи лутака йывăççисем. Çамрăк пулин те кашнин çинче ылтăн пек йăлтăртатакан 5—6 симĕç çитĕнме пултарать. Мĕн тери йывăр таяççĕ-ха вĕсем! Тĕлĕнмелле паха йывăççисем тепĕр пилĕк-ултă çултан, хăватлă вăй илнĕ хыççăн мĕнле пулĕç-ши?

— Сад ӳссе çитсен,—тет совхоз агрономĕ,—эпир кашни йывăçран вăтам шутпа пĕрер тонна грейпфрут пухса илме шутлатпăр.

Акă совхозăн тепĕр сачĕ. Эпир пулнă вăхăтра çамрăк йывăççисем çинче хĕрлĕрех сарă çиçĕсем нумайччĕ. Мандарин! Пирĕнтен кашниех ăна пĕрер татса илчĕ.

— Эсир хуппине сӳсе пăрахасшăн курăнать. Кирлĕ мар. Ку мандарина хуппи-мĕнĕпех çиме юрать,—асăрхаттарать агроном.

Чăн та, мандарин хуппи сӳхе те çемçе, çинчен тата пылак. Çак мандарин сортне совет селекционерĕсем туса хатĕрленĕ.

Халĕ Колхидăра цитрус йышши йывăççисене 29 пин гектар çине лартнă, вăл шутран 11 пин гектарне вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра лартнă. 1913 çулта Хура тинĕс сывăхĕнче Батумирен пуçласа Çĕнĕ Афон патне çитиччен цитрус йышши йывăççисем 200 пин экземпляр çеç пулнă, тепĕр майлă каласан, 150 гектара яхăн. Çапла ĕнтĕ, хальхи вăхăтра цитрус йышши йывăççисем лартнă лаптăк 200 хута яхăн ӳснĕ! Совет Колхиди сĕршыва миллиардшар мандарин, лимон, апельсин парса тăрать. Хăшпĕр садсенче кашни мандарин йывăççи çинче 500-шер е 600-шер симĕç çитĕнет.

Пиçетри сурçĕр сынни те халĕ вĕри чее ырă шăршăллă лимон саврашки ярса ĕçет. Хĕвеллĕ кăнтăр парни пур кĕтессене те çитет. Совет çынни чун-кăмăлĕ Тăван сĕршыв ырлăхĕшĕн савăнать.

Сочи—совет субтропикĕсен çурçĕр енчи чикки, кунта та пурĕ нумай пулать. Сочи таврашĕнчи цитрус йышши йывăççисен сачĕсене паллă совет ботаникĕ Б. Келлер академик çапла хак панă: вĕсем совет субтропикĕсен çурçĕрти форпосчĕсем пулса тăраççĕ. Чăн та çавăн пек вăл.

Декабрь. Кавказ тăвĕсен çурçĕр енчи тӳремлĕхĕнче çил-тăман кĕрлет, час-часах шартлама сивĕсем пулаççĕ. Çав вăхăтрах Сочири сăнав станцийĕ субтропик салĕнче мандаринсем пухса кĕртес ĕç вĕçленсе пырать, кая юлса чечек кăларакан розăсем ешĕреççĕ. Сайра яланах çуркуннехи пек туйăнать. Хăшпĕр чухне кунта хĕл сиввисем те килсе капланкалаççĕ. Анчах та вĕсем хăрушă мар. Сочири мандаринсем, лимонсем сивĕсене лайăх тӳсме пултараççĕ. Хăшпĕр чухне вĕсем виç-тăватă кун хушши юрпа шуралса лараççĕ, апла пулин те нимĕн чухлĕ те антрамаççĕ, сăмăл «сунаса» чăтса ирттерĕнĕ пек çеç туяççĕ.

Сочири сăнав станци цитрус тата субтропик культурисене çурçĕрелле куçарас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлет. Кунта сутçанталăка улăштарса çĕнетекен аслă Мичуринăн ученикĕ, селекционер Федор Зорин пысăк ĕçсем тăвать. Вăл тĕрлĕ сортсене Мичурин вĕрентнĕ пек пĕтĕçлентересе (гибридизаци) сивĕсене лайăх чăтакан çĕнĕ мандарин сорчĕсем тунă. Сăмахран, ученăй-селекционер сивве чăтма пултаракан, анчах тутлăхĕ начартарах Японири «уншиу» мандаринпа Индири чи лайăх мандарин сорчĕпе пĕтĕçлентернĕ. Çавна май сивĕсенчен хăраман тата тутлăх тĕлĕшпе питĕ паха сорт туса кăларнă. Зорин халĕ сивве нумай вăхăт хушши чăтма пултаракан тата хĕллене çулсă пăрахакан мандарин сорчĕ туса кăларма тăрăшать.

Сочири сăнав станци субтропик культурисене Сурçĕр еннелле куçарса пырать.

* * *

Крымăн кăнтăр çыранĕ—СССР субтропик хуçалăхĕн çĕнĕ районĕ. Климат тĕлĕшпе кунти вырăн Сочи çыранĕнчен уйрăмрах, сивĕрех темелле. Апла пулсан та кунта мандаринсем хăйсен малтанхи симĕçне пачĕç ĕнтĕ. Кăнтăр Крымăн «сăмăл аллине» пула цитрус йышши культурăсем Сурçĕр еннелле малалла куçса пыраççĕ. Вĕсене халĕ Сурçĕр Крымра, Украинăн кăнтăр районĕнче, Молдави çĕсенхирĕнче курма пулать. Чăн та, асăннă районсенче вăл культурăсене ятарласа тунă траншейăсенче çитĕнтереççĕ, хĕлле вĕсене витеççĕ. Анчах ку ĕç çапах та цитрус йышши культурăсене çурçĕрелле куçарас тĕлĕшпе тунă хăюллă утăм. Çав районсенче хальтерех çеç пуçарнă чей лартса тăвас ĕç те ăнăçлă аталанать. Чей промышленноçĕ «Краснодарский», «Крымский» сорт чейсем туса кăларма тытăннă.

Субтропик культурисене Вăтам Азири республикăсенче те лартса тума пуçăннă. Кунта климат тĕлĕшĕнчен субтропикри майлă ăшă районсем пур, анчах вĕсенче нӳрĕк çителĕксĕр. Çавăнпа вăл вырăнсене типĕ субтропиксем теççĕ. Тепĕр чăрмав вăл, типĕ çанталăксăр пуçне, хĕл сиввисем пулни. Совет çынни чăрмавсене çĕнтерсе пырать. Таджикистанри çĕнелсе улшăнакан Вахш юханшыв айлăмĕнче сахăр тростникĕн плантацийĕсем, мандарин сачĕсем çитĕнтереççĕ. Кăнтăр Хĕвеланăç Туркменири хĕвелтен пуян вырăнсенче гранат, инжир, миндаль рашпсене ӳстереççĕ. Виçĕ çул каялла Кăнтăр-Хĕвеланăç Туркменире совет çĕрĕ çинче пирвайхи хут финик пиçсе çитĕннĕ. Кзыл-Атрекпа Сумбары айлăмĕнче яштак финик пальмисем çӳлелле кармашнăçемĕн кармашаççĕ. Часах акă кунти вырăна Аму-Дарья шывĕ килмелле, вара тепĕр питĕ пуян субтропик районĕ вăйлă ешĕрме тытăнĕ.

Совет субтропикĕсем çулсерен саралса пыраççĕ. Совет çыннисем сутçанталăкăн çĕнĕ зонине тăвассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ, хĕвеллĕ кăнтăр çурçĕр еннелле çул хывать. Сутçанталăка çĕнетсе улăштарас ĕçе çĕнĕ те çĕнĕ вăйсем хутшăнаççĕ. Хăюллисенчен чи хăюллисем, ăслисенчен чи ăслисем—хастарлă совет çыннисем Мичурин калаçине яланах асра тытаççĕ. «Эпир сутçанталăк ырлăхĕсене кĕтсе ларма пултараймастпăр, вĕсене унтан çĕнсе илесси—пирĕн задача».

Г. СИДОРОВ,
географи наукисен кандидачĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ кунне урăх ҫĕршывсенче уявлани

Демократиллĕ Корея Халăх Республики

ПХЕНЬЯН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи ĕҫҫыннисем Совет Çарĕ 34 ҫул тултарнине уявлаҫҫĕ. Пхеньян, Ниньыйчжу, Аньчжу, Вонсан хулисенче тата республикăри ытти хуласенче «Совет Çарĕ халăхсен мирпе хăрушсăрлăхне ҫирĕп сыхласа тăрать», «Совет Çарĕ—Корея халăхне ирĕке кăлараканĕ тата унăн тусĕ» ятлă темăсемпе лекцисемпе калаҫусем иртереҫҫĕ.

Корейăн ССР Союзĕпе культурăллă ҫыхăнусем тытас тĕлĕшпе ĕҫлекен обществин пур пысăк хуласенче те Корея халăхне совет халăхĕн коммунизм строительствинчи ҫитĕнĕвĕсемпе, Совет Çарĕ Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тунă ҫĕнтерӳсемпе паллаштарма фотовыставкăсем уҫнă. Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи хуласемпе ялсенче «Падение Берлина», «Сталинградская битва», «Третий удар» тата ытти фильмсене те кăтартаҫҫĕ.

Корея Халăх ҫарĕн чаҫĕсенче Совет Çарĕ ҫинчен калаҫусем иртереҫҫĕ. Корейăн тĕп телеграф агентстви Халăх ҫарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем, совет воинĕсен Отечественнăй вăрçăри геройла ĕҫĕсемпе паллашнă хыҫҫăн, хăйсен тăван ҫĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн совет воинĕсем пек ҫапăҫатпăр,—тесе калани ҫинчен пĕлтерет.

Корейăри хаҫатсем ССР Союзĕн Хĕҫпăшаллă Вăйĕсем 34 ҫул тултарнă ятпа статьясем пичетлеҫҫĕ.

Китай Халăх Республики

ПЕКИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 ҫул тултарни ҫинчен Китайри хаҫатсем нумай ҫыраҫҫĕ.

«Чжунгоцинняньбао» хаҫатра Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен ҫар геройĕ Чжао Синь-юань ҫырнă статьяна пичетленĕ. Вăл хăйĕн статьине «Совет ҫарĕн малта пыракан ҫар искусствине вĕренĕр» тесе ят панă. Унта ҫапла ҫырнă: «Совет Çарĕ 34 ҫул хушши вăйланса пырас ĕҫре мухтавлă ҫула утса тухрĕ; вăл чи лайăх хĕҫпăшал тĕлĕшпе пуян, моралĕ шухăш-кăмăл енĕпе, политикăна вĕреннипе малта тăракан, пысăк вăй-хăватлă ҫар пулса тăчĕ, вăл пысăк вăй-хăватлă ҫар пулнине пĕтĕм тĕнче йышăнчĕ.

Совет Çарĕ 34 ҫул хушшинче ăнăҫлă вăйланса пыни тата чаплă ҫĕнтерӳсем туни ҫакăн ҫинчен калаҫҫĕ: вăл тĕнчери халăх демократи ҫĕршывĕсен ҫарĕсемшĕн кăтартуллă тĕслĕх пулса тăрать; марксизм-ленинизмпа хĕҫпăшалланнă ҫара никам та ҫĕнтерме пултараймасть.

Китай халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен ҫарĕ пĕтĕм тĕнчери мире сыхлас ĕҫре Совет Çарĕпе юнашар тăрать. Китай халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен ҫарăн Совет Союзĕнчи ҫартан нумай вĕренес пулать. Унăн Совет Çарĕн малта пыракан ҫар искусствине, организациллĕхпе дисциплина енчен Совет Çарĕ пек ҫирĕп пулма вĕренес пулать, тăван ҫĕршыва юратма тата интернационализм шухăшлĕ пулма совет салтакĕсенчен вĕренес пулать. Унтан вĕренсе пынипе пирĕн ҫар Совет Союзĕ пекех малта пыракан хăватлă держава пулса тăмалла, пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе тата пысăкрах ĕҫ тумалла»,—тенĕ Чжао Синь-юань.

Болгари

СОФИЯ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари халăхĕ хăйне ирĕке кăларакан Совет Çарне чунтан-чĕререн хисеплесе тав тăвать. Болгари халăхĕ Совет Çарне хисеплесе асăнса пурăнма чылай ҫĕрте пысăк монументсем, Болгарие ирĕке кăларассишĕн кĕрешсе хăйсен пуҫĕсене хунă паттăр совет воинĕсене хисеплесе асăнса пурăнма памятниксем лартнă.

Совет Çарĕн мухтавлă ҫĕнтерĕвĕсене чысласа Коларовградра, Русе хулинче, Толбухинăра, Сливенре тата ытти хуласенче те монументсем тунă.

Хальхи вăхăтра тата тепĕр тăватă пысăк хулара, ҫав шутра Кăнтăр Болгари столицинче—Пловдив хулинче тата Сталин хулинче монументсем лартма тытăннă.

Кăҫалхи март уйăхĕнче Софийăра пысăк монумент лартма тытăнаҫҫĕ. Ку монумент Совет Çарĕ ытти халăхсене ирĕке кăларса пынине сăнласа кăтартать. Ăна художниксен, скульпторсен тата архитекторсен Данко Митов ертсе пыракан коллективĕ хатĕрленĕ проект тăрăх тăваҫҫĕ.

Албани

ТИРАНА, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Албанире пур ҫĕрте те ĕҫҫыннисем хăйсене ирĕке кăларнă мухтавлă Совет Çарĕ 34 ҫул тултарнине уявлаҫҫĕ. Республика столицине Сталин Генералиссимусăн тата арми генералĕн Энвер Ходжан портречĕсемпе, совет воинĕсене ӳкернĕ пысăк плакатсемпе илемлетнĕ. Центральнăй площаде Совет Çарĕ Балканри ҫĕршывсене фашистла оккупантсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн мĕнле кĕрешнине кăтартакан пысăк картă ҫакнă.

Халăх ҫарĕн чаҫĕсенче Совет Çарĕн ирĕке кăларас ролĕ ҫинчен тата совет ҫар искусстви ҫинчен лекцисем иртереҫҫĕ. Албанипе ССР Союзĕн туслăх обществи Совет Çарĕ ҫинчен ҫĕршывра пур ҫĕрте те лекцисем иртерес ĕҫе организацилет. Тиранăри радио тăрăх Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 ҫул тултарнă ятпа ятарласа передачăсем параҫҫĕ.

Промышленность валли квалификациллĕ кадрсем хатĕрлеҫҫĕ

БУХАРЕСТ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх правительствипе Румынири рабочи парти хăвăрт аталанса пыракан халăх хуҫалăхĕ валли ăста специалистсем вĕрентсе хатĕрлеме хытă тăрăшаҫҫĕ.

Çĕршывра пур ҫĕрте те техникăна тата пĕр-пĕр професси вĕренмелли шкулсем, техникумсем тата аслă шкулсем уҫнă.

Иртнĕ ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, квалификацие ӳстермелли курсенче вĕренекенсен йышĕ нумайланнă, вĕренекенсен йышĕ 136 процент ӳснĕ. Çав тапхăрта техникăна тата пĕр-пĕр професси вĕренмелли шкулсенче вĕренекенсен йышĕ икĕ хут ҫурă патнелле ӳснĕ.

Юлашки виҫĕ ҫул хушшинче техникăна аслă шкулсенче вĕрентес ĕҫе анлă сарнă. Хура металлурги, ҫĕр кăмрăкĕ тата сăрт-ту ĕҫĕсен промышленноҫĕсем, чугун ҫул транспорчĕ, пулă хуҫалăхĕ валли специалистсем хатĕрлеме ҫĕнĕрен аслă шкулсем чылай уҫнă.

Кунсăр пуҫне, производствăра малта пыракан пиншер ҫынсем институтсем ҫумĕнче уҫнă курссенче, техникăна вĕренмелли каҫхи курссенче вĕренеҫҫĕ, аслă шкулсенче заочно вĕренекенсем те чылай. Иртнĕ ҫулта 110 пин рабочи производствăра ĕҫленĕ вăхăтрах хăйсен квалификацине ӳстернĕ.

Корейăри ĕҫсем

ХАЛĂХ ҪАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх ҫарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче ҫапла каланă: Корея Халăх ҫарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаҫĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕҫ оборонăра тăрса ҫапăҫаҫҫĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереҫҫĕ.

Паян Халăх ҫарĕн зенитнăй чаҫĕсем тата самолетсене хирĕҫ ҫапăҫакан салтакĕсем тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, ҫав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Тэквон, Муньчхонь, Чунхва тата Суньань районĕсене тапăннă.

Корейăри вăрçа чарса лартма ыйтаҫҫĕ

Скандинави ҫĕршывĕсенчи 79 хĕрарăм Хăрушсăрлăх Советне чĕнсе калани

КОПЕНГАГЕН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Политикен» тата «Ланд ог фольк» хаҫатсем Данири, Норвегири тата Швецири 79 хĕрарăм Хăрушсăрлăх Советне чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Çав ҫырура Хăрушсăрлăх Советне Корейăри вăрçа чарса лартма чĕннĕ.

Ку чĕнĕве Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствине те ярса панă.

«Эпир, Данири, Норвегири тата Швецири хĕрарăмсем, политика енĕпе тĕрлĕ шухăшлă ҫынсем,—тенĕ ҫырура,—Пĕрлешнĕ нацисен организацине Корейăри вăрçă кӳрекен инкексенчен хăтарма, ҫав вăрçă асап кӳрессине чарса лартма чĕнетпĕр.

Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн чи пысăк задачи—мире сыхласа хăварасси пулать. Халĕ унăн хăйĕн влиянийĕпе Корейăри тахҫантанпах кĕтекен перемирие тума, ҫывăх вăхăтра татăкланах мир тума пулăшас пулать.

Çакă вăл этемлĕхе ҫĕнĕ шанчăк парĕ!»

Чĕнӳ ҫине ҫаксем алă пуснă: Данирен—старши библиотекарь Ида Бакман, педагог Августа Дессинг, килхуҫи хĕрарăмĕ Рут Мерманн, писательница Эллен Херуп, художница Мая Киркебю, врач Маргарета Ломхольт тата ыттисем те—пĕтĕмпе 45 хĕрарăм. Норвегирен: Беренисе Марие Аанес, актриса Герд Григ тата ыттисем те—пĕтĕмпе 15 хĕрарăм. Швецирен: хĕрарăмсен союзĕн председателĕ Андреа Андреен, риксдаг депутачĕ Герда Нильсон, философи магистрĕ Эва Пальмер тата ыттисем те—пĕтĕмпе 19 хĕрарăм.

Тĕнчери лару-тăру

ФРАНЦИ РЕАКЦИЙĔ ҪĔНЕРЕН СУТĂНЧĂКЛА ĔҪ ТУНĂ

Лиссабонра агрессиллĕ Çурҫĕр Атлантика союзĕн черетлĕ сессийĕ уҫăлас умĕн Францин Наци пухăвĕ (парламенчĕ) Фор правительствине шанасси ҫинчен решени йышăннă. Фор правительствине шанассишĕн 327 депутат, ҫав правительствăна шанассине хирĕҫ 287 депутат сасăланă. Çакă вăл Наци пухăвĕ правительствăн «Европа ҫарне» тăвас политикипе килĕшнине пĕлтерет. Çавăн пек решени йышăнас умĕн парламентра нумай шавланă. Парламентри реакциллĕ ушкăнсем вăрттăн майпа пĕр-пĕринпе калаҫса татăлнă. Уйрăмах сылтăм социалистсем «Вашингтон умĕнче айăпа кĕрес марришĕн» хытă тăрăшнине палăртать «Се суар» хаҫат.

Пурте пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ, Европăри халăхсем Америкăн «Европа ҫарне» тумалли планне йышăнассине татăклăн хирĕҫ тăраҫҫĕ. Пуринчен ытларах Франци халăхĕн анлă массисем «Европа ҫарне» тăвассине хирĕҫ. Вĕсем ҫав ĕҫе Германи ҫарне ҫĕнĕрен туни пулать, ҫав ҫара туни Францишĕн ырă мар, тесе шутлаҫҫĕ. Халăх массисен ҫав шухăш-кăмăлне шута илсе, сылтăм социалистсем халăха улталас тесе хăйсем правительство ҫĕннĕ резолюци проекчĕпе «килĕшменни» ҫинчен пĕлтернĕ, унта Германи ҫарĕ Франципе тапăнас мар пирки Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи «шантарса сăмах пани» ҫинчен нимĕн те каламан, тенĕ. Фор правительстви вара ним шутласа тăмасăрах ҫĕнĕ проект тăратнă. Çĕнĕ проектра вăл малтанхи проектри шухăшсенех хăварнă. Çапла ĕнтĕ, сылтăм социалистсем Фор правительствин Америка империалисчĕсен интересĕсене пурнăҫламалли политикине ырланă.

Парламентра реакционерсем депутатсен пысăк пайĕ пулса тăраҫҫĕ. Çак реакционерсем йышăннă решени вĕсем Америка ҫар ҫыннисене тата Бонри иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн тавăрма тăрăшакансене парăнни пулать. Францири демократиллĕ хаҫатсем ку решение шăпах та ҫавăн пек хаклаҫҫĕ.

Америка агрессорĕсене пулăшакансене коммунистсен парламентри фракцийĕ тăрă шыв ҫине кăларнă. Депутат-коммунист Франсуа Бийу ҫакна палăртнă: реакци кирек мĕнле маневрсем тусан та, хăйĕн чăн-чăн тĕллевĕсене пытарса тăма тем тĕрлĕ тăрăшсан та, кунта сăмах Германие хĕҫпăшаллантарасси ҫинчен пынине Франци халăхĕ лайăх пĕлет. «Кунта пирĕн халăх ячĕпе обязательствăсем пама хăтланаҫҫĕ пулсан та,—тенĕ вăл,—пирĕн халăх хăйне ҫав обязательствăсемпе ҫыхăнман тесе шутлать».

Америка империалисчĕсем темиҫе ҫул хушши ĕнтĕ «Европа ҫарне» тăвас шухăшпа пурăнаҫҫĕ. Ун пек ҫар тăвасси ҫинчен хĕвеланăҫĕнчи виҫĕ державăн ҫар ҫыннисемпе дипломачĕсен тата агрессиллĕ Çурҫĕр Атлантика блокĕнче тăракансен представителĕсен вăрттăн пулса иртнĕ нумай канашлăвĕсенче сӳтсе явнă. Вашингтонри правительсем хушнипе Бонри «парламент» нумай пулмасть Хĕвеланăҫ Германи «Европăри ҫĕршывсене пĕрле хӳтĕлемелли пĕрлешӳ» текенскерне хутшăнасси ҫинчен решени йышăннă, Хĕвеланăҫ Германи ҫак ĕҫе хутшăнассине «законсем йышăнас йĕркепе» ырланă, нимĕҫ халăхĕн шухăш-ĕмĕчĕсене хирĕҫле ĕҫ тунă. Халĕ Лиссабонра Америкăн вăрçă пуҫарма хĕтĕртекенĕсем хăйсене пăхăнса тăракансене тата тепĕр хут хĕсеҫҫĕ, вĕсене США-н Европăри агрессиллĕ планĕсене пурнăҫламашкăн килĕшӳ пама хĕтĕртеҫҫĕ.

Англири «Дейли уоркер» хаҫат ҫак кунсенче пĕлтернĕ тăрăх, США, Англи тата Франци ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕсем Бонри правительство «канцлерĕпе» пĕрле Лондонра канашланă чухне, Ачесон Франци представительне систермелле каласа, ҫапла асăрхаттарнă: Франци Америкăн Европăри ĕҫĕсене пĕтĕмпех хӳтĕлеме, вĕсене пĕтĕмпех пурнăҫласа пыма килĕшмест пулсан, эпĕ ку ĕҫсем пирки Аденауэрпа хам тĕллĕнех каласса татăлăп, тенĕ. Канашлура пулнă Гарриман Англие ҫапла хăратнă: Англи «Европа ҫарне» тума килĕшмесен, США Англие пама пулнă «пулăшу» фондне чакарĕ, тенĕ.

Бонри иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн тавăрма ĕмĕтленекен правительсене хăйсен Вашингтонри хуҫисем хӳтĕлеҫҫĕ. Çавна туйса тăрса, Бонри правительсем хăйсем агрессиллĕ ĕҫсем тума шутланине пытарса тăмаҫҫĕ.

Нумай пулмасть, Демократиллĕ Германи Республикин информаци ведомствин пресс-конференцийĕнче Хĕвеланăҫ Германири «Нюрнбергер нахрихтен» хаҫатăн представителĕ ĕлĕк Гитлер генералĕ пулнă пĕр ҫын мĕн калани ҫинчен пĕлтернĕ. Çав ҫын: «Хĕвеланăҫ Германи 20 дивизи ытла пухса хĕҫпăшаллантарса ҫитерсессĕн, Франципе урăхла калаҫма пулать», тесе каланă.

Намăса пĕлмесĕр, сĕмсĕрленсе тунă заявленирен ҫакă курăнать: «Европа ҫарĕ» тесе каланă чухне пуринчен малтан Хĕвеланăҫ Германин хĕҫпăшаллă вăйĕсене асра тытаҫҫĕ. Хĕвеланăҫ Германи ҫарĕ Францин малашнехи пурнăҫне пĕтерсе лартма пултаракан хăрушлăх пулнине Франци халăхĕ лайăх ăнланать. Акă мĕншĕн Францири коммунистсен партийĕ Фор правительствин преступлениллĕ политикине хирĕҫ пĕрлешсе кĕрешме чĕннине Франци халăхĕн пур сийĕсем те ырласа йышăнаҫҫĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИ ХАЛĂХĔ РЕАКЦИЕ ҪĔНТЕРНĔРЕНПЕ ТĂВАТĂ ҪУЛ ҪИТРĔ

Февралĕн 25-мĕшĕнче Чехословаки республикинчи ĕҫҫыннисем хăйсем историллĕ ҫĕнтерӳ тунă кунранпа тăватă ҫул тултарнине савăнăҫлăн уявлаҫҫĕ. Ĕҫҫыннисем ҫак ҫĕнтерĕве тăвиччен ҫĕршыв тулашĕнчи тата ҫĕршыв ăшĕнчи реакци Чехословакири халăх демократи стройне пĕтерсе лартма тата ҫĕршывра тепĕр хут капиталистсемпе помещиксен влаҫне туса хума хăтланнă пулнă.

Тăватă ҫул каялла, февраль уйăхĕнчи асран кайми кунсенче, Чехословакири реакционерсем, хăйсене Америкăпа Англи империалисчĕсем пулăшса тăнипе усă курса, ҫĕршыври влаҫа хăйсен аллине илес, ҫĕршыва мирпе демократи лагерĕнчен уйăрас, ăна вăрçă пуҫарма хĕтĕртекенсен лагерьне хутшăнтарас тĕлĕшпе тахҫанах туса хатĕрленĕ плана пурнăҫа кĕртме шут тытнă. Анчах халăх тăшманĕсем пысăк йăнăш тунă, вĕсен ĕҫĕ ăнăҫлă пулман. Чехословакири коммунистсен партийĕ чĕннипе рабочи класс ертсе пыракан ĕҫҫыннисен анлă массисем халăх демократийĕн ҫĕнтерĕвĕсене, халăх демократи стройне сыхлама ҫĕкленнĕ. Тăшманăн халăха хирĕҫле каварне аркатса тăкнă.

Февраль уйăхĕнчи событисенчен Чехословакири коммунистсен партийĕ—К. Готвальд ертсе пыракан парти—ĕҫ халăхне ертсе пыракан тата организацилесе пыракан вăй пулни, парти тавра ҫĕршыври пĕтĕм ĕҫ халăхĕ тата демократиллĕ мĕнпур вăйсем тачă пĕрлешни курăннă. Çакна ăнланса илме йывăр мар: республикăри пур йышши тăшманĕсене те хирĕҫ коммунистсен партийĕ ҫирĕппĕн кĕрешсе пынă, ҫавна кура унăн халăх хушшинчи авторитечĕ питĕ пысăк пулнă.

Февраль уйăхĕнчи ҫĕнтерӳ хыҫҫăн Чехословаки республики хăвăрт малалла кайса пыма, ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем тума пуҫланă. 1948 ҫулхи февралĕн 28-мĕшĕнче тухса каланă сăмахра К. Готвальд ҫакна палăртнă:

«Пирĕн халăх демократи республикин аталанăвĕнче ҫĕнĕ тапхăр пуҫланать, пирĕн стратегиллĕ тĕллев вăл—социализм ҫулĕпе хăвăрт малалла кайса пырасси пулать», тенĕ.

Халăх хуҫалăхне аталантармалли малтанхи икĕ ҫуллăх плана ăнăҫлă тултарнă хыҫҫăн, республика 1949 ҫулта социализм никĕсне хывмалли пилĕк ҫуллăх плана пурнăҫласа пыма тытăннă, ку ĕҫре чаплă ҫитĕнӳсем тунă. 1950 ҫултах промышленность туса кăларакан продукцин хисепĕ вăрçăчченхи шайран 50 процент ытларах пулнă.

Нумай пулмасть 1951 ҫулхи—пилĕкҫуллăхăн виҫҫĕмĕш ҫулĕнчи—плана мĕнле тултарни ҫинчен пĕлтерни пичетленсе тухнă. Çав пĕлтерӳрен Чехословаки халăх хуҫалăхĕ пĕрмаях малалла кайса пыни, вăйланса пыни курăнать. Промышленность производствин шайĕ пĕр ҫулталăк хушшинче 14,9 процент ӳснĕ, уйрăмах йывăр промышленность нумай вăйланнă. Машиностроени, металлурги тата электротехника промышленноҫĕсен ҫĕнĕ предприятийĕсем ĕҫлеме тытăннă.

Ялхуҫалăхĕ енĕпе те чылай пысăк ҫитĕнӳсем тунă. Иртнĕ ҫулталăкра ҫĕршывра тырпул тухăҫлăхĕ пысăк пулнă. Ял темиҫе пин ҫĕнĕ ялхуҫалăх машини илнĕ. Мелиораци енĕпе пысăк ĕҫсем тунă, пуҫă саврăнăшне лайăхлатнă. Çак ĕҫсене пурнăҫланине кура кăҫал ялхуҫалăхĕ тата ытларах вăйланать, тата нумайрах тырпул туса илме пултарать.

Çапла вара, ҫĕршывра социализм никĕсне хывма экономикăн ҫирĕп базине туса пыраҫҫĕ. Социализм никĕсне хывас ĕҫ халăхăн анлă массисем чунтан-чĕререн тăрăшса туса пыракан ĕҫ пулса тăчĕ. Совет Союзĕ пĕрмаях пулăшса пынипе, ССР Союзĕн пуян опычĕпе социализм строительствинче усă курса, Чехословаки халăхĕ социализм ҫулĕпе малалла пырать, вăл социализм ҫĕнтерессине шанса тăрать.

Чехословаки тунă ҫитĕнӳсем, вăл мир лагерĕнче ҫирĕп тăни Америкăпа Англи империалисчĕсене—Чехословаки халăхне мирлĕ те пултаруллă ĕҫре чăрмантарасшăн пур майсемпе те тăрăшакан империалистсене,—хытă тарăхтарать.

Коммунистсен партийĕ тата правительство тавра тачă пĕрлешсе, Чехословакири ĕҫҫыннисем тăшман мĕнле киревсĕр ĕҫсем тума хăтланнине тимлĕ асăрхаса тăраҫҫĕ. Вĕсем Америкăпа Англи империалисчĕсен тата вĕсен тарҫисен преступникла планĕсене путлантарса лартассишĕн ҫине тăрса кĕрешме хатĕр.

Н. В. ГОГОЛЕ ХИСЕПЛЕСЕ АСĂНМАЛЛИ КУНА УЯВЛАМА ХАТĔРЛЕНЕҪҪĔ

Мартăн 4-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 ҫул ҫитет. Çак куна Совет Союзĕнче кăна мар, ытти ҫĕршывсенче те анлă уявлама хатĕрленеҫҫĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Вена хулинче пулнă сессийĕ Н. В. Гоголе хисеплесе асăнмалли кунсене иртересси ҫинчен йышăннă решение пур ҫĕрте те ырласа йышăнчĕҫ. Гоголь кунĕсене иртерме хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмах халăх демократи ҫĕршывĕсемпе Китайра тимлĕ ĕҫлеҫҫĕ.

Чылай ҫĕршывсенче Гоголь кунĕсене уявлама хатĕрленес тĕлĕшпе ĕҫлекен комитетсем организациленĕ. Çав комитетсене культура ĕҫĕнчи, обществăллă тата политикăллă ĕҫри паллă деятельсем кĕнĕ. Вырăс литературипе тĕнчери литература классикĕн пурнăҫĕпе творчестви ҫинчен докладсем, лекцисем иртерме тата ытти нумай ĕҫсене тума палăртнă. Театрсем Н. В. Гоголь пьесисем тăрăх спектакльсем хатĕрлеҫҫĕ. Издательствăсем аслă писатель произведенийĕсене тата писатель пурнăҫĕпе творчестви ҫинчен ҫырнă кĕнекесене пичетлесе кăлараҫҫĕ.

Польшăри наукăпа политика пĕлĕвĕсене сарас тĕлĕшпе ĕҫлекен общество Гоголе хисеплесе асăнмалли кунсенче аслă писателĕн пурнăҫĕпе творчестви ҫинчен лекцисем иртерес ĕҫе организацилет. Польшăри ҫамрăксен союзĕн членĕсем республикăри предприятисемпе ялсенче Н. В. Гоголь ҫинчен калаҫусем иртерме, докладсем туса пама хатĕрленеҫҫĕ. Чехословакире, Болгарире, Румынире тата ытти ҫĕршывсенче Гоголь пурнăҫĕпе творчестви ҫинчен паллаштаракан выставкăсем тăваҫҫĕ. Наука академийĕсем аслă писателе хисеплесе ларусем иртереҫҫĕ.

Гоголь вилнĕренпе 100 ҫул тултарнине Италире анлă палăртаҫҫĕ, унта вырăссен аслă писателĕ пĕр кĕске вăхăт хушши пурăннă. Римра тата Туринра чаплă ларусем иртернĕ. Çав ларусенче Гоголь ҫинчен Италири культура ĕҫĕнчи паллă прогрессивнăй деятельсем доклад тунă.

Н. В. Гоголь произведенийĕсене Китай Халăх Республикинче питĕ кăмăллаҫҫĕ. Унăн нумай кĕнекисене Китай чĕлхипе темиҫе хутчен те пичетлесе кăларнă. Юбилей кунĕ тĕлне «Халăх литератури» ятлă издательствăра китайла куҫарнă «Мертвые души» кĕнекен 15-мĕш изданийĕ пичетленсе тухать. Театрсенче Гоголĕн «Ревизор», «Женитьба» комедийĕсене тата «Мертвые души» произведени тăрăх ҫырнă инсценировкăна лартаҫҫĕ, ҫав спектакльсене курма халăх йышлă ҫӳрет.

Н. В. Гоголь хăйĕн вилĕмсĕр произведенийĕсемпе тĕнчери литературăна нумай пуянлатнă, тĕнчери культурăн пуянлăхне ӳстернĕ. Унăн творчествине тĕнчери тĕрлĕ ҫĕршывсенче нумайăшĕ пĕлеҫҫĕ, ҫав ҫĕршывсенчи халăхсем вырăссен аслă писательне хисеплесе асăнаҫҫĕ.

Д. БОЧАРОВ.

Тунисри ĕҫсем

ТЕГЕРАН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранри хаҫатсенче, сăмахран, «Журнальде Тегеран» хаҫатра, пичетленнĕ официальнăй пĕлтерӳ тăрăх, Иран ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министерстви Тунисри нациллĕ юхăма хӳтĕлес шутпа Иранăн ООН-ри делегаци патне инструкци янă, унта Иран делегацине ытти ҫĕршывсен, уйрăмах мусульмансен ҫĕршывĕсемпе, Азири государствăсен делегачĕсемпе пĕрле килĕштерсе ĕҫлеме, Тунис халăхĕпе правительствин прависене хӳтĕлеме хушнă.

Индонези правительстви США-ран „пулăшу" илме килĕшмен

ИНДОНЕЗИН ЮТ ҪĔРШЫВ ĔҪĔСЕН МИНИСТРĔ ОТСТАВКĂНА ТУХНĂ

ДЖАКАРТА, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Индонези ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕ Субарджо правительствăпа парламента пĕлтермесĕрех Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе килĕшӳ тунă. Унта Америкăн «хăрушсăрлăха пĕрле хӳтĕлесси ҫинчен 1951 ҫулта йышăннă законĕ» тăрăх Индонези «пулăшу илесси» ҫинчен каланă. Индонезири общественность ҫав килĕшĕве хирĕҫ хытă протестленĕ. Индонези правительстви хăйĕн ларăвĕнче ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕ Субарджо ҫинчен сӳтсе явнă.

Лару хыҫҫăн информаци министрĕ Мононуту пресс-конференцире правительство ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕ Субарджо тунă ĕҫе сивлерĕ тесе пĕлтернĕ. Правительство ҫавăн пек решени йышăннипе ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕн Субарджон ирĕксĕрех отставкăна тухмалла пулнă. Ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министрĕ вырăнне Сукиман премьер-министр вăхăтлăха хăй ĕҫлесси ҫинчен пĕлтернĕ.

ИНДИ ПАРЛАМЕНЧĔН СУЙЛАВĔ

ДЕЛИ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Трипура штатĕнче суйлав коллегине суйлас ĕҫ вĕҫленнĕ. Çав коллеги хăй енчен парламентăн ҫӳлти палатине (штатсен советне) Трипура штатĕнчен депутатсем суйлать. Коллегие Индири коммунистсен партийĕн кандидачĕсем ытларах суйланнă, вĕсем коллегири 30 вырăнтан 16 вырăн йышăннă.

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 ҫул тултарнă тĕле

СĔМĔРЛЕ. Хутар ялĕнчи общественность вăтам шкул коллективĕпе пĕрле вырăссен аслă писателĕ Николай Васильевич Гоголь вилнĕренпе 100 ҫул тултарнине паллă тума хатĕрленет.

Ялти клубра Н. В. Гоголь ҫырнă произведенисен витринине тунă.

Вăтам шкул коллективĕ Гоголь юбилейĕ тĕлне литература каҫĕ иртерет.

Е. Григорьева юлташ ертсе пынипе 9—10-мĕш классенче вĕренекенсем Гоголь ҫырнă «Тарас Бульба» повеҫри уйрăм сыпăксем, «Май уйăхĕнчи каҫ, е шывă путнă хĕр» произведенийĕ тăрăх чăвашла инсценировка хатĕрлеҫҫĕ.

Художествăллă пултарулăх коллективĕн членĕсем Украина халăх ташшисене вĕренеҫҫĕ.

В. ТОЛСТОВ.

Художествăллă пултарулăх коллективĕсен смотрĕсем лайăх иртнĕ

Пирĕн республикăра иртнĕ ҫулхи декабрьпе кăҫалхи январь уйăхĕсенче ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсен смотрĕсем пулса иртрĕҫ. Унта пине яхăн драма, хор, музыка, хореографи коллективĕсем, виҫĕ пин ҫын ытла уйрăм исполнительсем хутшăнна. Вырăнсенчи смотрсенче колхозниксем, ялти интеллигенци, вĕренекенсем—пурĕ 20 пин ҫынна яхăн хăйсен пултарулăхне кăтартнă.

Художествăллă пултарулăх смотрĕсем Елчĕк, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Вăрнар, Пĕрĕс, Комсомольски тата Çĕрпӳ районĕсенче аван иртнĕ.

Елчĕк районĕнчи смотр иртерес тĕлĕшпе ĕҫлекен комисси хăйĕн членĕсене уйрăм ял Совечĕсем ҫумне ҫирĕплетсе тухнă. Комисси коллективсене татăш пулăшса пынă. Смотрсенче Аслă Елчĕкри, Патрекелĕнчи, Аслă Таяпари драмăпа хор коллективĕсем палăрчĕҫ. Вĕсем классиксен, совет композиторĕсен тата халăх юррисене лайăх юрлаҫҫĕ. Патрекелĕнчи колхоз хорĕ (руководителĕ М. Воронцов) халăх юррисене уйрăмах пысăк туйăмпа юрлать.

Вырăнсенчи смотрсенче мала тухнă коллективсене, уйрăм исполнительсене районти смотра кайма суйласа илнĕ.

Шупашкар районĕнче те смотра драма, хор, хореографи кружокĕсен нумай коллективĕсем тата духовой оркестр хутшăннă.

Сарапайкассинчи вулав ҫуртĕн художествăллă пултарулăх коллективĕсем «Коммунизмăн аслă стройкисем» ятлă литературăпа музыка монтажне аван йĕркеленĕ. Иккассинчи драма коллективĕ Дьяконовăн «Парнеллĕ туй» пьесине лартса панă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче смотрсене 23 художествăллă пултарулăх коллективĕ, вуншар уйрăм талантлă исполнительсем хутшăннă.

Февральпе март уйăхĕсенче вырăнсенчи смотрсенче мала тухнă коллективсемпе уйрăм исполнительсен районти смотрĕсем пулса иртеҫҫĕ. Смотрсем вăхăтĕнче районти культура ҫурчĕсенче харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ художниксен картинисен выставкисем те пулаҫҫĕ.

Н. АМУРЦЕВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районта художество пултарулăх кружокĕсен смотрĕ пырать. Юлашки вăхăтра клубсемпе вулав ҫурчĕсен ҫумĕнчи художество пултарулăх коллективĕсен смотрĕ 16 ялта пулса иртрĕ.

Çак кунсенче район центрĕнче ялти художество пултарулăх коллективĕсен смотрĕ пуҫланчĕ. Смотрта Чаканар ялĕнчи вулав ҫурчĕ ҫумĕнчи драма кружокĕ Мдивани ҫырнă «Братья» пьесăна тата А. Чеховăн водевилĕсене лайăх лартса пачĕ. Хĕрсен хорĕ вырăс халăхĕн юррисене пултаруллăн юрларĕ. Ирсе ялĕнчи вăтам шкулти библиотекарь Зинаида Левина К. Симоновăн «Сын полковника» поэмине тата А. Твардовскин «Василий Теркин» поэмин сыпăкне питĕ ăста вуласа пачĕ.

Тимирязев ячĕпе тăракан колхоз членĕ Ярандайкина колхозница чăваш халăх юррисене лайăх юрларĕ. Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан промысла артелĕнчи хĕрарăмсен хорĕ совет композиторĕсен юррисене ăста юрланине те палăртмалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 24-мĕшĕнче, кăнтăрла тата каҫхине вырăсла спектакль

„Женитьба"

Ыран, февралĕн 25-мĕшĕнче, вырăсла спектакль

«ЗА ЧЕМ ПОЙДЕШЬ, ТО И НАЙДЕШЬ»

Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каҫхи 20 сехетре пуҫланать.

„Родина" кинотеатрта

Паян, февралĕн 24-мĕшĕнче, тата малаллахи кунсенче те

„БЛИЗНЕЦЫ"

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20, 22 сехетре пуҫланаҫҫĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕҪĔ: г. Чебоксаом, ул Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăҫ пайĕ—4-17, ялхуҫалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, ҫырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00630 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.